Инв. № 253 31-219

Ç. П. ПЕТРОВ

# Çĕнĕ çĕнтерӳсем патне, МАЛАЛЛА!

Хакĕ 17 пус

1931

Чăвашсен Патшалăх Истаттĕлстви
ШУПАШКАР

*

Ç. П. ПЕТРОВ

# ÇĔНĔ ÇĔНТЕРӲСЕМ ПАТНЕ, малалла!

Партти Тĕпкомĕпе Тĕп Контроҫ Комиççин 1930 ç. теккапĕр уйăхĕнҫе пулнă пĕрлешӳллĕ пленăмĕн тата Ҫулхула крайкомĕн 1931 ç. йанвар уйăхĕнҫе пулса иртнĕ пленăмĕн решшени çинҫен тунă токлат.

ҪĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР
1931

Г. Чебоксары
типография № 1
Чувашгиза
Уп. Чувашглавлита № 1335
Заказ № 406
Тираж 5100 экз.

# Ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне, малалла!

Йулташсем! Тӗпкомпа Тӗп Контроҙ Комиҫҫин пӗрлешӳллӗ пленӑмӗн йышӑнӑвӗсем сотсиалисӑм тӑвас ӗҫре калама та ҫук паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Мӗншӗн тесен—вӑл йышӑнусем пирӗн партти XVI-мӗш сиесӗн йышӑнӑвӗсене татӑклӑн каласа пани пулса тӑраҫҫӗ. Тӗпкомпа Тӗп Контроҙ Комиҫҫин пленӑмӗ хӑйӗн постановленийӗсемпе пирӗн парттине, тата рапоҙҙи класа кӑҫалхи ҫул пленӑм йышӑннӑ сатаҙсене пурнӑҫа кӗртсе сотсиалисӑмла економӗкӗн никӗсне туса ҫитерме хушса хӑварҙӗ. Ку ӗҫе тума пӗтӗм рапоҙҙи класа вӑйлӑн ҙӗнҙӗ. Ку майпа пленӑм 1931-мӗш ҫул ваҙҙи тунӑ халӑх хуҫалӑхӗн планне пӑхса тухрӗ. Ытти ыйтусем ҫаксем пулнӑ: Снапшени халӑх комиссариаҙӗ аш-какайпа пахҙа-ҫимӗҫсене хатӗрлесе тӑратас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени ҫинҙен, Тӗпсойуспа потрепиттӗл копператсийӗ мӗнле ӗҫлени ҫинҙен, тата совет суйлавӗ ҫинҙен. Ку ыйтусем пурте малтанхи ыйтӑвӑн пайӗсем пулаҫҫӗ, ӑна пӑхӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫак ыйтусене пурнӑҫа кӗртсе ҫитерни—пилӗк ҫуллӑх планӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗн прокрамне пурнӑҫа кӗртме май памалла.

Парттин Ҙулхула Крайкомӗ партти Тӗпкомӗ йышӑннӑ йӗркепе, Тӗпкомпа Тӗп Контроҙ Комиҫҫин теккапӗрте пулса иртнӗ пленӑмӗ хыҫҫӑн крайри халӑх хуҫалӑхӗн контроллӗ ҙыхвӑрсене, апат-ҫимӗҫсем хатӗрлес, аш-какайпа пахҙа-ҫимӗҫсем кирлӗ таран тӑратас ыйтусене, потрепиттӗл копператсийӗ мӗнле ӗҫлесе пынине, ҫуракипе коллективисатси ыйтӑвӗсене, тата ҫӗнӗ пысӑк строиттӗлствӑ ҫинҙен пӑхса тухса сӳтсе-йаврӗ. Вӑл ый-

тусем пĕтĕмĕшпех Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин теккапĕрте пулса иртнĕ пленăмĕ йышăннисенђен тухса—Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин пленăмĕн йышăнăвĕсене татăклăн пурнăçа кĕртни пулса тăраççĕ.

Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин теккапĕрти пленăмĕ йышăннисене пурнăçа кĕртсен епĕр 1931-мĕш çулта сотсиалисăмлă еккономĕкĕн никĕсне туса çитеретпĕр, терĕм епĕ. Вăл прокрамăна пурнăçа кĕртни—Совет сойусĕшĕн те, тĕнђери пролеттариатшăн та питĕ пысăк, татăклă паллă вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та, Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин пленăмĕ, 1931-мĕш çул вађђи контроллĕ ђыхвăрсем палăртса, хăйĕн токкумĕнтĕнђе: теккапĕрте пулса иртнĕ пленăмăн йышăнăвĕсем пĕтĕм тĕнђипе историллĕ паллă вырăн йышăнса тăраççĕ—тесе çырса хуђĕ. Промышлĕннăçра «кам кама?» тенĕ ыйтăва хађхи вăхăтра сотсиалисăм майлă татса панă пулсан—1931-мĕш çулăн прокрамне пурнăçа кĕртни «кам кама?» тенине йалхуçалăхĕнђе те çавнашкалах сотсиалисăм майлă татса памалла. Анђах ку клас кĕрешĕвĕ вăйсăрланса пырассине пĕлтермест. Клас кĕрешĕвĕ татах та çивĕђленĕ, анђах клас кĕрешĕвĕн фронђĕ ансăрланса пымалла. Сотсиалисăмлă еккономĕкĕн никĕсне туса çитерсен, йалхуçалăхĕнђе те сотсиалисăмла поçитсине çирĕплетсен, епĕр «кам кама?» тенĕ ыйтăва пĕтĕм тĕнђе карти çине куçатпăр. Кунта вара пĕтĕм тĕнђери пролеттариатпа пĕрле, капиттал креппăçĕсене штурăмлама тытăнатпăр. Капла тума пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕн прокрамне пĕтĕмĕшпех пултармалла. Пролеттари тиктаттурĕн çĕршывĕ умне партти лартнă сатађсем çинђен пĕтĕм парттипе рапођђисен массине питĕ тĕплĕн ăнлантарса памалла. Епĕр хађхи вăхăтра ђăнах та ЕÇП-ĕн (НЭП) йулашки тапхăрĕнђе пурăнни, сотсиалисăм тапхăрне кĕни çинђен тĕплĕн ăнлантарса—пĕтĕм массăна пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕн прокрамне пурнăçа кĕртме мопилисатсилемелле. Епĕ кăна акă мĕншĕн калатăп. Сылтăм оппортуниссем, тата сылтăмрисемпе килĕшӳ тунă «сулахайрисем» епĕр хађ сотсиалисăм тапхăрне кĕменха, епĕр хађ ЕÇП-ĕн (НЭП) йулашки тапхăрĕнђе пурăнмастпăрха, теççĕ, т. ыт. те. Çапла тунипе вĕсем парттине тĕрĕс çул çинђен кулаксем, непмăнсем йенелле пăрса йарасшăн,

Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш татăклă çулĕн прокрамне епĕр мĕне шута илсе тăватпăрха? Кăçалхи çул сотсиалисăмла економĕкĕн никĕсне туса çитерме пире тивĕçлĕ никĕс кирлĕ. Вăл никĕс пирĕн пури, вăл никĕс пирĕн мĕнле, тесе ыйтас пулаť хамăртан. Пилĕк çуллăх планăн малтанхи икĕ çулĕн иттокĕсене илсе пăхсан акă мĕн курăнаť. Вăл икĕ çул хушшинђе сотсиалисăмлă промышлĕннăçăн протуксийĕ 30 мĕлйарт тенкĕрен ытларах пулни. Пилĕк çуллăх планпа палăртнă тăрăх малтанхи икĕ çулта промышлĕннăç протуксийĕ 29,3 мĕлйарт тенкĕлĕх пулмалла пулнă. Çапла вара, çак икĕ çул хушшинђе пилĕк çуллăх планра палăртнă прокрамсене ытлашшипех тултарни курăнаť. Çак ĕнтĕ пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕ вађђи тунă халăх хуçалăхĕн планне пурнăça кĕртмелли никĕс пулса тăраť. Промыышлĕннăçăн пĕтĕм протуксийĕ вăрçăђђенхипе танаштарсан икĕ хут ытларах ўснĕ. Иртнĕ çулпа танаштарсан—25 прођђăн ўснĕ. Пирĕн крайра 39,2 прођђăн ўснĕ. Çапла вара пирĕн крайри промышлĕннăç кăларнă протукси ўсĕмĕ пĕтĕм Совет сойусĕнђи промышлĕннăçпа танаштарсан 14 прођђăн ытларах пулни курăнаť. Ку ĕнтĕ пирĕн край халлĕхе йалхуçалăхлă-интустриллĕ край пулса тăракансекер, пысăк хăвăртлăхсемпе малалла пынине, тата малашне епĕр хамăр крайа **йалхуçалăхлă-интустриллĕ** крайран **интустриллĕ-йалхуçалăхлă** край тума пултарассине кăтартаť. Çаках тата парттин тĕп çулйĕрĕ тĕрĕс икенне питĕ аван кăтартса параť.

Иртнĕ икĕ çул хушшинђе пирĕн хуçалăхра тата мĕнле паллăсем пурха? Промышлĕннăçа ăна пĕтĕмĕшпе илсе, уйрăмăн-уйрăмăн палăртмасăр ўстерме пулаť. Вăл ўсĕм çăмăл интустрине вăйлатас, вак-тĕвек йапаласем ытларах тăвас йĕрпе, йе шултра интустрине вăйлатас йĕрпе пыма пултараť. Капиталисла çĕршывсенђе хуçалăх йĕркесĕр, плансăр ўссе пыраť. Капитталиссен тĕп шухăшĕ—услам ытларах илесси кăна. Анђах пирĕн апла мар, пирĕн хуçалăх çирĕп план тăрăх ўсет. Хуçалăха йĕркеллĕн йертсе пынипе, сотсиалисăмла планласа пынипе пирĕн мĕнле ўсĕмсем пулђĕçха? Пирĕн шултра интустри калама çук хăвăрттăн ўссе карĕ, ун пек ўсĕм нихăçан та пулман. Шултра интустрин протуксийĕ пилĕк çуллăх

планра палăртнă тăрăх икĕ çул хушшинђе 12,5 мĕлйарт тенкĕллĕх пулмалла пулнă пулсан, вăл 13,8 мĕлйарт тенкĕлĕхе çитнĕ. Хаљхи вăхăтра пирĕн пир-авăр промышлĕннăçĕ нађар уђасткă пулса тăрат̆ха. Икĕ çул хушшинђе епĕр пилĕк çуллăх планра малтанхи икĕ çул ваљђи палăртнă прокрамăна 84 прођђăн кăна тултарнă. Анђах ку вăл ђĕрĕ тавар çителĕклĕ пулманнинђен килнĕ, кун çинђен сахал мар калаçнă, çавăнпа та епĕ хаљ ун çинђе ђарăнса тăмастăп.

Çавнашкал ĕнтĕ пилĕк çуллăхăн виççĕмĕш çулĕнђи промышлĕннăç прокрамĕн никĕсĕ.

Илерха йалхуçалăхне. Тырă акса тумалли çĕр талкăшĕ йулашки вăхăтра 118 мĕлйун кектартан 127,8 мĕлйун кектара çитиђђен ӳсрĕ. Çапла вара епĕр кăçалхи çул пилĕк çуллăх планпа палăртса хунинђен иртсе карăмăр. Илер тата йалхуçалăх протуксин ӳсĕмне. Иртнĕ çулпа танаштарсан тĕш тырă пухасси 21,8 прођђăн ӳснĕ. Кăçалхи çул çĕр мамăкĕ, сахăр кăшманĕ, тата ытти технĕкле куљттурăсене тăвасси хытă ӳсрĕ. Ку ĕнтĕ епĕр 1931-ш çулта пир-авăр тавращĕсене, пĕтĕм çăмăл промышлĕннăç протуксине иртнĕ çулхисенђен нумай ытларах туса кăларма пултарассине кăтартат̆. Колхоссемпе совхоссене йышлатса тĕреклетсе пынипе—тĕш тырă тăвас ыйтăва епĕр татса патăмăр. Кăçалхи çул ĕнтĕ хамăр умма аш-какай ыйтуне татса парас сатађа лартрăмăр. Тĕш тырă кирлĕ таран тăвас сатађа епĕр темиçе çул хушшинђе кăна пурнăçа кĕртрĕмĕр пулсан—аш-какай сатађне пирĕн пĕтĕмĕшпе илсен 1931-мĕш çулта пурнăçа кĕртмелле. Ку—рапођђи класпа партти умне, вăл шутрах пирĕн край умне те пысăк сатађсем кăларса тăратат̆. Пирĕн крайăн потрепиттĕллĕ крайран тăвăмлă (производящий) край пулса тăмалла. Çавăнпа та 1931-ш изводящий» край пулса тăмалла. Çавăнпа та 1931-мĕш çул пирĕншĕн татăклă çул пулса тăрат̆. Крайри тырă акса тумалли çĕр талкăшĕ 19 прођђăн ӳснĕ. Хаљ вăл—6.332.000 кектар. Пĕтĕм Совет Сойусĕпе пур ђухăнпа вăтам хресђен хуçалăхĕсен шутĕнђен пĕр ђĕрĕке (тăвату пайран пĕри) колхоссене пĕрлешнĕ, талкăшпех колхоса куçнă май кулаксене класĕпех пĕтерсе пыратпăр, пирĕн крайри хресђен хуçалăхĕсенђен 11 % тăраççĕ.

Акă тата тĕрлĕ таварсем çӳретессине (крусоопорота) илер. Ку питĕ паллă вырăн, çавăн пирки рапоҌҌи класпа тĕп хресҌен массисен йала, çурт-йĕр, куҌттур, тата ытти условийĕсем мĕнлине пĕлме пулаТ. Иртнĕ çулта Ҍукунçул транспăрҌĕн крусоопороҌĕ 235 мĕлйун тоннă пулнă. Ку Ҍыхвăр епĕр иртнĕ çулта пилĕк çуллăх планăн йулашки çулĕн прокрамне 25 проҌҌăн ытлашши тултарнине кăтартаТ. Епĕр икĕ çул хушшинҌех крусоопорот тĕлĕшпе пилĕк çуллăх плана ытлашшипех тултарнă. Ку ĕнтĕ пирĕн хуçалăх çирĕп плансем тăрăх йĕркеленсе пынипе хăвăрттăн ӳснине кăтартаТ. План тăрăх йертсе пыни çĕршыври пуйанлăхсемпе питĕ тухăçлăн усă курма май параТ.

Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕ патне епĕр хамăр çĕршывра ĕçсĕрлĕхе (безработицу) пĕтертĕмĕр. Ку, паллах ĕнтĕ, историллĕ паллă вырăн йышăнса тăраТ. Пирĕн рапоҌҌисем ĕçсĕр çӳремеççĕ—çав вăхăтрах кăпитталисла патшалăхсенҌе 30 мĕлйун рапоҌҌи ĕçсĕр çӳреççĕ. Ку шута вĕсен çемйисене те кĕртсен—вăл шут 80 мĕлйун çынна çитет. Урăхла каласан—Совет сойусĕнҌи халăхăн çурри Ҍухлĕ пролеттарисем пĕр татăк çăкăрсăр, ыранхи кун мĕн пулассине пĕлмесĕр лараççĕ.

Çак иртнĕ çулта пирĕн промышлĕннăçа çĕнĕрен 700.000 рапоҌҌи хутшăннă. Пĕтĕм халăх хуçалăхне илсен—1 мĕлйун çĕнĕрен рапоҌҌи хутшăннă. Ку шута тата йалхуçалăх рапоҌҌийĕсем кĕмеççĕха. Пирĕн крайра рапоҌҌисен шуҌĕ 28 проҌҌăна йахăн ӳснĕ. Совет сойусĕпе шутласан 7 сехетлĕ ĕç кунĕ çине пур рапоҌҌисенҌен 45 проҌҌăнне куçарнă, пирĕн крайра 25 проҌҌăн куçарнă. Таттисĕр ĕç ерни çине Совет сойусĕпе пур рапоҌҌисенҌен 67 проҌҌăн куçнă, пирĕн крайра 78 проҌҌăн. Çапла вара—таттисĕр ĕç ерни çине пирĕн крайра пĕтĕм СойусринҌен ытларах куçнă, 7 сехетлĕ ĕç кунĕ çине—сахалтарахха..

Çавнашкал ĕнтĕ пирĕн ӳсĕмсемпе Совет сойусĕнҌи рапоҌҌи класăн пурнăç условийĕсене кăтартакан кĕске, Ҍыхвăрсем. Илер тата пилĕк çуллăх планăн иккĕмĕш çулĕн вĕçĕнҌе пирĕн халăх тупăшĕ мĕнле пулнине. 1926—27-мĕш çулта халăх тупăшĕ 26 мĕлйарт та 826 мĕлйун тенкĕ пулнă, 1929-мĕш çулта 30 мĕлйарт тенкĕ-

не йахăн (малтанхи çулпа танаштарсан—ӳсĕм 11 проҧҧăн), 1930-мĕш çулта 35,8 мĕлйарт тенкĕ (1929-мĕш çулпа танаштарсан—ӳсĕм 19 проҧҧăн) пулнă.

1931-мĕш çулта халăх тупăшне епĕр 49 мĕлйарт тенкĕне çитиҧҧен ӳстерме палăртатпăр. Ӳсĕм—35 проҧҧăн пулаť. 1931-мĕш çулта ку тĕлĕшпе пилĕк çуллăх плана пĕтĕмпе тултарса çитерне пекех пулаť, 0,7 проҧҧăн çеç çитмест.

Акă Совет сойусĕнҧе йепле хăвăртлăхсем. Çав вăхăтрах, кăпитталисăм çĕршывĕнҧе ĕçсем мĕнле пыраççĕха? Керманире вăрçăҧҧен çулленхи ӳсĕм 3,5 проҧҧăн, Анклин 1903-мĕш çултан 1908-мĕш çула çитиҧҧен çуллен ӳсĕм 1,5 проҧҧăн пулнă, револҧутсиҧҧенхи Раççейре 2,6 проҧҧăн пулнă,—Совет сойусĕн 1931-мĕш çултах ӳсĕм хăвăртлăхĕ 35 проҧҧăн пулаť. Мĕн курăнаťха кунтан? Керманире кун пек ӳсĕм 10—11 çулта çеç пулнă, револҧутсиҧҧенхи Раççейре кунашкал ӳсĕм 13 çул хушшинҧе кăна пулнă пулĕҧҧĕ, Анклире 20 çулта пулаť. 1930-мĕш çулта кăпитталисла çĕршывсенҧе, 1929-мĕш çулпа танаштарсан, происвотствă çакнашкал ҧакса пынă: Анклире 8,4 проҧҧăн ҧакнă, Керманире 14 проҧҧăн, Полҧшăра 26 проҧҧăн, Америкре 17,8 проҧҧăн. Хурçă шăратса кăларасси Керманире 20 проҧҧăн ҧакнă, Америкре 24,2 проҧҧăн, т. ыт. те. Çак ҧыхвăрсем ĕнтĕ Комунисла Интернатсионал тата парттин XVI-мĕш сиесĕнҧе Сталин йулташ: пирĕн, Совет çĕршывĕнҧе ӳсĕм, вĕсен, кăпитталиссен, криçĕс, происвотствă ҧакни курăнаť,—тесе хак пани пит те тĕрĕс иккенне калама та çук аван кăтартаççĕ. Кăпитталисла çĕршывсенҧе промышлĕннăç криçĕсĕ йалхуçалăхĕнҧи криçĕспе пĕрлешсе кайнă. Капла пулнипе криçĕс татах та тарăнланаť, тата клас хирĕçĕвĕсем çивĕҧленсех пыраççĕ. Пĕр йенҧен кăпитталисăм криçĕсĕ тарăнлансах пыни, тепĕр йенҧен Совет сойусĕ хăвăрттăн, пысăк утăмсемпе малалла кайни—кăпитталиссене çĕнĕ вăрçă, пуринҧен малтан Совет сойусне хирĕç хатĕрлеттерет. «Промышлĕннăç парттине» сут тунинҧен епĕр питĕ лайăх куртăмăр: тĕнҧери кăпиталиссем Совет сойусне хирĕç тухма хăйсен хĕçпăшалĕсене çĕр çывăрмасăр хатĕрлеççĕ. «Промпарттин» ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнипе епĕр ку тискер ĕç

пулассине вăхăтлăха ҫартăмăр, анҫах империалиссем инттервентси тума хатĕрленме пăрахманнине пирĕн лайăх астуса тăрас пулать.

Ворошшилăв йулташ Комсомлăн IX-мĕш сиесĕнҫе ҫĕршыв сыхлăхне тĕреклетесси ҫинҫен калана сăмахĕнҫе пуршуаҫин паллă кенералĕ—Лҫутенторф статйинҫен пĕр сыпăк илсе вуласа панă. Лҫутенторф—вăрҫă ĕҫĕн спетсиалисĕ, вăл 1914-мĕш ҫулта вăрҫă пуласси ҫинҫен те малтанах каласа панă. Халҫ ҫак спетсиалис сывхарса килекен вăрҫă ҫинҫен акă мĕн сырать: «Каллех ҫывхарса килекен тĕнҫери вăрҫă паллисем курăнма пуҫларĕҫ. Йулашки ҫулсенҫе иртнĕ тĕнҫе вăрҫи ҫинҫен ҫырнă литтераттурă йышĕ питĕ ӳссе карĕ. 1914-мĕш ҫулҫҫенхи пекех «ҫипиллăсем» палăраҫҫĕ, вĕсем пулас тĕнҫе вăрҫи ҫинҫен калаҫҫĕ. Пур ҫĕрте те: пиршăсенҫе, ҫи ҫухăн пӳртсенҫе—питĕ те хăраттаракан тĕрĕслĕхпе пулас вăрҫă ҫинҫен калаҫаҫҫĕ. Тершавăсем (патшалăхсем) пĕрмайах хатĕрленеҫҫĕ. Правиттĕлствăсемпе халăх претставиттĕлствисем вăрҫă ваҫҫи кирлĕ ҫынсем хатĕрлеҫҫĕ. Керманири пур йышши хаҫатсем те вăрҫа хатĕрленни, тата вăрҫăллă проппакантă ҫинҫен пĕлтерсе тăраҫҫĕ...

Малалла тата:

...«Епĕ хамăн статйасенҫе тĕнҫе вăрҫи 1932-мĕш ҫулхи майăн 1-мĕшĕнҫе пуҫланать тесе палăртрăм... Вăл майăн 1-мĕшĕнҫе пуҫланатти, йе ҫулталăкăн ытти кунĕсенҫе пĕринҫе... Кирек йепле пулсан та, вăл тăшманшăн апат-ҫимĕҫ хатĕрлесе тăратас тĕлĕшпе ҫи кансĕр вăхăтра пулмалла. Ҫавăнпа та вăл кун тырăсем вырма тытăниҫҫен темиҫе ерне малтан пулассине кĕтме пулать...» Анҫах... «Пĕтмелли халăхсемшĕн пурĕпĕр: вăрҫă 1931, 1932, йе 1933-мĕш ҫулта пуҫланатти... Пур халăхсем те вăрҫăна хутшăнса кайаҫҫĕ. Халăхсенҫен кашнийех мĕнле те пулин майпа—патшалăх вăйĕпе, тата вĕсен марионеткисемпе («пуканисемпе»—**куҫаракан** ) улталанать, анҫах ҫапах та халăхсене вăрҫăн малтанхи кунĕпе 1914-мĕш ҫулхи авкустра мĕнле тĕлĕнтернĕ, ҫавнашкалах тĕлĕнтерес пулать».

Акă мĕн калать вăрҫă ĕҫне ҫи лайăх пĕлекенсенҫен пĕри, Лҫутенторф кенерал. Ку ĕнтĕ капитталисăм тĕнҫи калама ҫук пысăк криҫĕс ăшне кĕрсе кайни—вăрҫă патне,

пуринђен малтан Совет сойусне хирĕç—илсе пынине кăтартать. Çавăнпа та—çĕршыв сыхлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе пĕр ђарăнмасăр, вирлĕн ĕçлесе пырасси пирĕн пысăк сатађсенђен пĕри пулса тăрать.

Кăпитталисăм йĕрки хăйĕн хирĕçÿсене хăй татса пама пултараймасть. Еккономĕк тĕлĕшĕнђен çĕрсе пынă май—кăпиталисăмла çĕршывсенђе шухăш (итейă) тĕлĕшпе те ђухăнланса пыраççĕ. Кăпиталисла çĕршывсенђе машшинлă происвотствăна пăрахса алăпа (машшинсăр) ĕçлеме пуçласси çинђен каласкала пуçлаççĕ. Çапла тунипе вĕсем калама та çук ĕççĕрлĕхе, ĕççĕр çÿрекен рапођђисен шутне ђакарасшăн. Пуршуаçи писсаттĕлĕсем ĕççĕр йулнă рапођђисен пурнăçĕ çинђен калама çук хăрушлăн çыраççĕ. Амерĕкре ыткалакансен шуђĕ ÿссех пырать, рапођђисем çĕршерĕн-çĕршерĕн хваттерсĕр çÿреççĕ. Акă мĕн çырать Амерĕк пассаттĕлĕ Теотор Трайçĕр:

«Ыйткаласа çÿренипе çеç пурăнать ĕççĕр йулнă çынсен çарĕ. Вĕсем ĕçлеме пултараççĕ, ĕçлесшĕн çунаççĕ, анђах правиттĕлствă хăй туса йанă еккономĕкпе сотсиаљнай расрухха пирки—вăл çынсем ĕççĕр тăрса йулнă.

Нйу-Йоркăн нумай районĕсенђе ĕççĕрлĕх, хăйĕн мĕнпур хăрушлăхĕсемпех—пурнăça çирĕп кĕрсе ларнă. 1930-мĕш çулхи октăпĕр уйăхĕнђе епĕ Поуери (Поуери—урам йаđĕ) тăрăх иртсе пынă ђух çамрăк çынсемпе çирĕп арçынсене куртăм. Вĕсем троттуарсем çинђе ларађђĕç, урамри хунар йуписем тавра пухăна-пухăна тăнăђђĕ, йе склатсем умĕнђи йăвăç кĕперсем çинђе сывăрађђĕç. Епĕ вĕсенђен нумайĕшин сухалĕсем пĕр вершук таран ÿснине асăрхарăм... Вăл районра сухал хырма пĕтĕмпе те пилĕк пус çеç тăрать. Анђах вăл çынсен çав пилĕк пус укçи те çук.

Ĕççĕр çÿрекенсене ĕç тупса пама правиттĕлствă ђылай акĕнтствăсем орканисатсиленĕ. Анђах халђ ĕç тупасси—Протвейра (урам йађĕ) ылттăн хăйăрĕсем тупасси пекех шанђăксăр ĕç вăл. Çентăпĕр уйăхĕнђе вăл акĕнтствăсем умĕнђе çиђшер-сакăршар пин ĕççĕр рапођђисем пухăнса ĕç ыйтнă, анђах вĕсенђен ĕç тупнисем 200 ç. ытла мар».

Çав «куљттурлă» Амерĕкре, Тарвин теорине сарнăшăн тĕрмесене лартнă çĕршывра—халђ машшинлă происвотствăран алăпа ĕçлесси çине куçасси çинђен калаçаççĕ.

Ытти çĕршывсенђе, уйрăмах илсен—Керманире ĕççем мĕнле пыраççĕха? Çĕрпуххăв хулинђе рапфак уçăлнă май Макçăм Коркки унти рапођђисем патне çыру йанă. Çав çырура çапла çыраť вăл:

«Нумай пулмасť Кермани хаçађĕсем хăйсен, çĕршывĕнђи çамрăксене университтетсене вĕренме кайма кирлĕ марри çинђен ăнлантарма тытăннă, мĕншĕн тесен çĕршыв «вĕреннĕ çынсем» нумаййипе, интелекентси нумаййипе асапланаť. Çавнашкал, ĕççĕр çынсемшĕн тăрăшнă пек хăтланнинђе хăравçăллă шухăшсем пытанаççĕ, мĕншĕн тесен инттелекентси нумай пулсан вăл пролеттариат майлă çаврăнса, комуниссен парттине кайма пултараť. Анђах пуршуаçи çак «уйрăм» хăрушлăха кăна мар, вăл урăххине те сисет.

Вăл темиçе ĕмĕр тăрăшшĕ услам хыççăн тăнĕ пĕтиђђенех хыттăн хăвалана пирки, темиçе ĕмĕр тăрăшшĕ рапођђисемпе хресђенсене тискеррĕн експлоаттатсиленĕ пирки хăйĕн пĕтĕм вăйĕ ђакса пынипе, хастарлăхĕ пĕтсе пынине ытларан ытла уççăн туйса пыраť.

Йевроппăри пуршуаçи историн хăватлă йухăмĕ ăна хăй вăйĕпе вилĕм патне илсе кайнине кура—«ăслăлăх ытла сарăлса кайни етемлĕхĕн пурнăçне çăмăллатма пултараймасť», «ăслăлăх çынна мехханисатсилет», «етемĕн етемлĕхне пĕтерет», «етемлĕхе хăтармалли майа тĕне аталантарассинђе шырамалла» тесе калаçма тытăнаť. Паллах, «етемлĕх» тесе кунта пуршуаçине каланă».

Куратăри: вĕсем çĕршыва интустрилесси çинђен каламаççĕ, вĕсем тĕне аталантарассинђе çăлăнăç шыраççĕ. Кăна пуршуаçин «ăслă çыннисем» калаççĕ. Акă тата, тепĕр философсăфла краф Кайçĕр-Линк мĕн калаť:

«Интустриалисатси çынсенђен кăткă тăваť», «пурнăç ђирлĕ пулса карĕ», «кусенђен çăлăнăç Испанире, тата Кăнтăр йенђи Америĕк респуплĕкĕсенђе шырамалла, мĕншĕн тесен унта «етем ăшши» çухалманха»,—тет.

Акă мĕн калаççĕ пуршуаçин философсăфĕсемпе вĕреннĕ çыннисем.

Малалла Макçăм Коркки Кăнтăр йенђи Америĕкри писсаттĕлĕн—Уковастăн статйине илсе кăтартаť. Уковаст «шухăшсен çунаттине касма, пĕђĕк йапаласен тарăнлăхне, вĕсен пахалăхне йуратса пурăнма» сĕнет.

Ку ĕнтĕ—кайалла ђакма ђĕнни пулса тарат̆.

Франтсин премйер-министăрĕ пулнă Кайо çапла калат̆: «çын пурăнас тет пулсан, унăн çĕнĕ Прометтейа—ăслăлăха (науккăна) сăнђăрлас пулат̆».

Çакнашкал ĕнтĕ пуршуаçи шухăшсем йенђен нађарланса, кайалла ђакса пынине кăтартакан фактăсем. Империалисăм, тата сотсиаллă револђутсисем вăхăтĕнђе кăпитталисăм çĕрсе пынипе пуршуаçи шухăшсем тĕлĕшпе кайалла ђакса пырат̆.

Çав вăхăтрах Совет сойусĕнђе шкула кайма çул çитнĕ ађасене пурне те вĕрентес ĕç пуçланђĕ, майăн 1-мĕшĕ Ђăваш респуплĕкĕнђе хут пĕлменлĕхе тĕппипех пĕтерме тăрăшатпăр. Епĕр пĕтĕм совет опђăлăхне, пĕтĕм рапођђи класа катăрсем хатĕрлес ыйту тавра мопилисатсилетпĕр. Вуншар, çĕршер пин çĕнĕ катăр хатĕрлетпĕр. Епĕр ăслăлăх фронђĕн—куљттурăпа технĕккăн пĕр. Епĕр ăслăлăх фронђĕн—куљттурăпа технĕккăн креппăçĕсене çĕнтерсе илетпĕр, хамăр хуçалăх ваљђи епĕр куљттурлă вăйсем хатĕрлессишĕн тăрăшатпăр, ӳссе пыратăратпăр. Кăпитталисла çĕршывсене епĕр историллĕ ђи кĕске вăхăтра технĕкпа економĕк тĕлĕшĕнђен хăваласа çитсе иртсе каймалла.

Акă ĕнтĕ пилĕк çуллăх планăн малтанхи икĕ çулĕн иттокĕсем. Епĕр сотсиалисăм çулĕпе утса ӳссех пыратпăр, сотсиалисăмла економĕкĕн никĕсне туса çитерессишĕн вирлĕн çапăçатпăр, çав вăхăтрах кăпитталисла çĕршывсем кайалла, тĕпсĕрлĕхе кайса пыраççĕ. Паллах, капла пулни вăл пире малашне сотсиалисăм тăвас ĕçре, тата тĕнђери пролеттариата пулас çапăçусем патне хатĕрлес ĕçре аласене усса ларма хушмаст̆. Пирĕн хуçалăх, вăрçă, куљттурă фронђĕсенђе те çапăçас пулат̆. Çавнашкалах, тĕнђери пролеттариатăн та, Комунисла инттернатсионал йертсе пынипе—влаçа хăйĕн аллине илсе пĕтĕм тĕнђипех пролеттари тиктаттурĕ тăвассишĕн çапăçма хăйĕн вăйĕсене пĕрлештерсе хатĕрленмелле.

Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕ ваљђи палăртнă прокрамсем мĕнлеха? Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнђе пирĕн халăх пĕтĕм тупăшне пĕлтĕрхипе танаштарсан 35 прођђăн ӳстерсе пурĕ 49 мĕлйарт тенкĕне çитермелле. Пĕрлештернĕ çектăрăн пайĕ ку халăх тупăшĕ

шутӗнҫе 81 проҫҫӑн таран пулмалла. Ҫапла вара, уйрӑмлӑ ҫектӑра 19 проҫҫӑн ҫеҫ тивет.

1931-мӗш ҫул ваҫҫи епӗр финанс планӗ пӗр план туса вӑл планпа пӗтӗм халӑх тупӑшӗн виҫӗ пайран иккӗшне ҫавӑрса илме пултартӑмӑр. Халӑх пӗтӗм тупӑшӗн виҫ пайран икӗ пайне епӗр план картине кӗртӗмӗр. Ку калама ҫук пысӑк ӳсӗм пулса тӑрат̆. Финанс планне пурнӑҫа кӗртесси пирӗн умма питӗ пысӑк сатаҫсем тӑратат̆. 1931-мӗш ҫулта финанс планӗ тӑрӑх пирӗн 31,1 мӗлйарт тенкӗ пухса 1,5 мӗлйарт тенкӗрен саппас тумалла.

Сотсиалисӑмлӑ ҫектӑра иртнӗ ҫулта 10 мӗлйарт тенкӗ хывнӑ пулсан—кӑҫал 17 мӗлйарт тенкӗ хывмалла. Ку укҫана хывнипе епӗр 500 ытла ҫӗнӗ хапрӑк-савӑт ӗҫе йаратпӑр. Ку ҫыхвӑрсем пирӗн ӗҫе ӗненмен, пирӗн ӗҫ тухмаст̆ текен оппорттуниссемшӗн питӗ вирлӗ ответ пулса тӑраҫҫӗ. Ку ӳсӗмсене епӗр сулӑнҫӑксемпе икӗ фронтпа, пуринҫен ытла сылтӑм сулӑнҫӑкпа, тата пур сулӑнҫӑксемпе килӗшекенсемпе кӗрешсе пырса турӑмӑр.

Пирӗн Ҫулхула крайӗнҫе 1931-мӗш ҫулта халӑх хуҫалӑхне 825 мӗлйун тенкӗ хывма палӑртнӑ. Вӗсенҫен Халӑх хуҫалӑхӗн аслӑ Канашӗ планлакан промышлӗннӑҫе 374 мӗлйун тенкӗ паратпӑр; 1930-мӗш ҫулпа танаштарсан 121 проҫҫӑн ытла пулат̆ вӑл. Електро-строиттӗлствӑ ваҫҫи 56 мӗлйун тенкӗ хывӑнат̆; пӗлтӗрхипе танаштарсан 240 проҫҫӑн ытла. Йалхуҫалӑхӗ ваҫҫи 100 мӗлйун тенкӗ паратпӑр; Пӗлтӗрхипе танаштарсан—ӳсӗм 118 проҫҫӑн. Пурӑнмалли ҫуртйӗр тӑвас ӗҫе 78 мӗлйун тенкӗ хыватпӑр,—пӗлтӗрхинҫен 203 проҫҫӑн ытла. Комунаҫнӑй строиттӗлствӑна 23,5 мӗлйун тенкӗ хыватпӑр. Ӳсӗм—87 проҫҫӑн. Сотсиаҫно-куҫттурнӑй строиттӗлствӑ ваҫҫи 54,9 мӗлйун паратпӑр, пӗлтӗрхипе танаштарсан—ӳсӗм 225 проҫҫӑн. Ҫак укҫа-тенкӗне хывни пирӗн крайӑн планне пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртме май памалла. Ку укҫа-тенкӗне хывнипе епӗр ҫаксене туса ҫитермелле: Автосавӑт, Станоксем тӑвакан савӑт, ҫӗнӗ Сормӑвӑ, Палахнари хут тӑвакан кӑмпинат, Ратио-кӑмпинат, Ҫӗмӗрлери кӑмпинат, Окка урлӑ каҫмалли кӗпер, тата ытти те. Ҫавнашкал ӗнтӗ пирӗн крайри строиттӗлствӑ. Ку ӗҫсем—партти тӗп ҫулйӗрне пурнӑҫа Край-

ком тĕрĕссĕн кĕртсе пынипе крайа пысăкран та пысăк ӳсĕмсем пулса пынине кăтартаççĕ. Пирĕн хамăр крайа йалхуçалăхлă-интустриллĕ крайран интустриллĕ-йалхуçалăхлă край тумалла.

Çавăн пек укçа хывнипе 1931-ш çулта епĕр мĕнле ӳсĕмсем тăватпăрха? Пĕтĕм сойусĕпе илсен промышлĕннăçăн пĕтĕм протуксине 45 проҫ. ӳстеретпĕр. Хамăр крайра пĕтĕм протукси кăларасси 56 проҫҫăн ӳсмелле, пĕтĕм сойусĕнҫен 11 проҫҫăн ытларах. Шултăра интустрин пĕтĕм протуксине пирĕн 58 проҫҫăн ӳстермелле, çăмăл промышлĕннăç протуксине—27 проҫҫăн. Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнҫе промышлĕннăç ваљҫи тунă пилĕк çуллăх плана 79 проҫҫăн тултаратпăр, шултра промышлĕннăç тĕлĕшпе илсен—1931-мĕш çулăн вĕçĕ патне пилĕк çуллăх плана 98 проҫҫăн тултармалла. Çакăнтан ĕнтĕ епĕр малалла пит те пысăк утăмсемпе кайни курăнаť. Çăмăл интустри, ҫĕрĕ тавар çителĕклех пулманнипе кайарах йулса пыраť, анҫах промтаварсен фонҫĕ 11,5 мĕлйарт тенкĕрен 14,6 мĕлйарт тенке çитиҫҫен ӳсет. Мĕн çинҫен калаççĕха çак ҫыхвăрсем? Вĕсем пирĕн хуçалăх пысăк утăмсемпе тăвалла хăпарса пыни çинҫен калаççĕ.

Илер рапоҫҫисен пурнăçне. Кăçалхи çулта рапоҫҫисен йышĕ тата 2 мĕлйун çынна ӳсмелле. Пĕтĕмĕшпе илсен, рапоҫҫисен шуҫĕ 16 мĕлйуна çитмелле. Асăннă 2 мĕлйун шутне 800.000 хĕрарăм кĕрет. Хĕрарăмсене происвотствăна ытларах хутшăнтарас тĕлĕшпе пирĕн умра калама çук пысăк сатаҫ тăраť. Промышлĕннăç, тата кунпа пĕрле рапоҫҫисен шуҫĕ пит те хăвăрттăн ӳссе пынă май—рапоҫҫи класăн пурнăç условийĕсемпе кулҫтурлăхĕ те аванланса пымалла. Пĕтĕмĕшпе илсен, ĕç укçи 6 проҫҫăн ӳсет. Уйрăмăн илсен: метталиссен 11,6 проҫҫăн, тимĕр тăпри кăларас ĕçре ĕçлекенсен 15 проҫҫăн, çĕр кăмрăкĕ кăларас ĕçре ĕçлекенсен 16 проҫҫăн ытла, ҫукунçул çинҫе ĕçлекенсен 8 проҫҫăн ӳсет. Ĕç укçин фонҫĕ 12,5 мĕлйарт тенкĕрен 15,8 мĕлйарт тенке çитиҫҫен ӳсет. Пĕтĕм сойусри рапоҫҫисенҫен 92 проҫҫăнĕ 7 сехетлĕ ĕç кунĕ çине, 98 проҫҫăнĕ таттисĕр ĕç ерни çине куçаççĕ. Йăла условийĕсене аванлатас ĕç ваљҫи 285 мĕлйун тенкĕ, ĕç сыхлăхĕ ваљҫи 155 мĕлйун

тенкĕ, сотсиаљнăй страхховани ваљљи 2,138 мĕлйарт тенкĕ, пурăнмалли çуртйĕр тăвас ĕç ваљљи 1,1 мĕлйарт тенкĕ памалла тунă. Хутла вĕрентес, катăрсем хатĕрлес, науккăллă ĕç, сывлăха сыхлас ĕç ваљљи, т. ыт.—1930-ш çулта 5 мĕлйарт тенкĕ панă пулсан—кăçал 6,5 мĕлйарт тенкĕ памалла тунă.

Акă мĕн ђухлĕ укçа-тенкĕ хыватпăр епĕр хамăр хуçалăха 1931-мĕш çулта. Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнђи прокрамăна пурнăçа кĕртме пирĕн промышлĕннăçĕн пахалăх кăтартăвĕсем çине, шалти вăйсемпе халăх сретствисене мопилисатсилесси çине пит те вирлĕн çавăрăнса пăхмалла. Мĕншĕн тесен промышлĕннăç протуксипе строиттĕлствăн хăйне ларакан хакне ђакарнинђен, ĕç тухăçлăхне хăпартнипе пухăннă укçа-тенкĕ, халăх ран опесаттĕлнăй, тата ирĕклĕ йĕркепе пухăнмалли укçатенкĕ, тата ыттисем те—финанс планĕ çине пĕтĕмпех кĕнĕ.

Финанс планĕ пирĕн 31 мĕлйарт тенкĕ ытларах пĕрлештерет. Пирĕн çакна лайăх астăвас пулаť: промышлĕннăç протуксипе строиттĕлствăн хăйне ларакан хакне ђакарни пире 3 мĕлйарт тенкĕ памалла, строиттĕлствă хакне 12 прођђăн ђакарнипе епĕр 800 мĕлйун тенкĕ илмелле. Промышлĕннăç протуксин хăйне ларакан хакне пĕр прођђăн ђакарни—180 мĕлйун параť, кăна пурнăçа кĕртмесен—вăл укçана çухатни пулаť; монтташсăр строиттĕлствăн хакне пĕр прођђăн ђакарни 100 мĕлйун тенкĕ памалла, таварсене транспăртпа çӳретессине 1 прођ. ђакарни 30 мĕлйун тенкĕ памалла; промышлĕннăç протуксипе кунне 1 прођђăн ӳстерни—200 мĕлйун тенкĕ параť, потрепиттĕл копператси çиçтеми тăрăх таварсем çавăрнассине 46 кунран 37 куна çитиђђен ђакарни—300 мĕлйун тенкĕ пама пултараť. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пахалăх (кађђĕствă) кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртесси çине калама та çук вирлĕн çавăрăнса пăхмалла. Строиттĕлствă хакне йӳнетнипе кăна епĕр хамăр крайри пысăк строиттĕлствă ваљљи хывакан укçа ђухлĕ укçа перекетлемелле.

Малалла йалхуçалăх ыйтăвĕсем çине куçатăп. 1931-ш çулта пирĕн пур ђухăнпа вăтам хуçалăхĕсенђен 50 прођ. коллективламалла. Колхоссемпе совхссен тырă акса тумалли çĕр талкăшĕ Совет сойусĕнђи тырă акса тумалли çĕр талкăшĕн 53 прођђăнĕ таран пулмалла. Таварлăх

протукси шутĕнҫен совхоссемпе колхоссен 65—70 проҫ. памалла. Ҫак ҫыхвăрсем мĕн ҫинҫен каласçĕ? Вĕсем сотсиалисăмлă çектăр уйрăм хуçалăхсен çектăрĕнҫен нумай пысăк вырăн йышăнса тăни ҫинҫен каласçĕ. 1931-мĕш çул, вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине сарса вăйлатса йăрас ĕçре татăклă çул пулмалла. Тĕш тырă кирлĕ таран тăвас ыйтăва, пĕтĕмĕшпе илсен, епĕр татрăмăр ĕнтĕ. Ҫапла пулни—пире тĕш тырă кирлĕ таран тăвас ыйтăва тата татăклăнрах пурнăçа кĕртсе пынипе пĕрлех—вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçе вирлĕн малалла илсе пыма май парать. Тĕш тырă кирлĕ таран тăвас сатаҫа пурнăçа кĕртесси мĕнле çулпа пынă—вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕç те çав çулйĕрпех пымалла. Вăл çулйĕр—колхоспа совхос çулĕ.

Комуниссен Парттин Тĕп Комиттеҫĕ çапла йышăнҫĕ: совхоссенҫе вылҫăх-ҫĕрлĕх кĕтӳвĕсене 2.800.000 пуçа çитермелле (халҫхинҫен икĕ хут ытла ӳстермелле), сысна кĕтӳвĕсене 1.900.000 пуçа çитермелле (халҫхинҫен 10 хут ытла ӳстермелле), сурăх кĕтӳвĕсене 1.400.000 пуçа çитермелле (халҫхинҫен икĕ хута йахăн ӳстермелле) сĕт-çу тресĕн кĕтӳне 120.000 пуçа çитермелле. Кунсăр пуçне, рапоҫҫи копператсú йĕркипе те вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетесси ӳсет, т. ыт. те. Колхоссемпе совхоссенҫе вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине вирлĕн сарса йанипе çак çитес ҫи çывăх çулсенҫех аш-какай кирлĕ таран тăвас сатаҫа пурнăçа кĕртсе çитермелле.

Кăçалхи çулта пирĕн МТС-сем халҫхинҫен 4 хут ытларах орканисатсилемелле. Тырă акса тумалли çĕр талкăшне 143 мĕлйун кектара çитермелле, вĕсенҫен 9,5 мĕлйун кектарĕ совхоссен пулмалла. Пилĕк çуллăх планăн висçĕмĕш çулĕнҫи прокрамăна пурнăçа кĕртнипе епĕр акă мĕн илетпĕр (17-мĕш стр. таплитсăна пăх):

Ҫакнашкал кăтартусем мĕне пĕлтерессĕха? Вăл—сотсиалисăмлă екскономĕкĕн никĕсне хывса çитерессине пĕлтерет, «вăл йалхуçалăхĕпе сотсиалисăмла интустрине пĕр хуçалăха пĕрлештерессине, йертсе пырас тĕлĕшпе йалхуçалăхне сотсиалисăмла интустрине пăхăнтарассине, йалхуçалăхĕпе интустри протуктисене пĕр-пĕринпе улăштарса пынă май хулапа йал хушшинҫи çыхăнăва йĕркелесе çитерессине, классем—пуринҫен малтан кăпиттал çуралма пулăшакан каналсене хупса тĕппипех пĕтерес-

| | 1930 ç. | | 1931 ç. | |
|---|---|---|---|---|
| | Пĕрлешӳлĕ çектăр | Уйрăмлă çектăр | Пĕрлешӳлĕ çектăр | Уйрăмлă çектăр |
| Халăх тупăшĕ . . . . | 74,5% | 25,5% | 81,8% | 18,2% |
| Строиттĕлствăна, т. ы. укçа хывасси. . . . | 87,5 „ | 12,5 „ | 92,5 „ | 7,5 „ |
| Промышлĕннăç пĕтĕм протуксийĕ . . . . | 94,7 „ | 5,3 „ | 97,5 „ | 2,5 „ |
| Йалхуçалăхĕн таварлă протуксийĕ . . . . . | 28,2 „ | 71,8 „ | 53 „ | 47 „ |
| Вак суту-илӳ опорођĕ | 94,5 „ | 5,5 „ | 97,6 „ | 2,4 „ |

сине, йулашкинђен—тӳрех классене пĕтерме май паракан çулпа илсе пыракан происвотствăпа валеçӳ условийĕсем тăвассине пĕлтерет» (Сталин)

Çавăнпа та Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин теккепĕрте пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленăмĕ: сотсиалисăмла економĕкĕн никĕсне туса çитерни пĕтĕм тĕнђипе паллă **историллĕ çĕнтерӳ пулса тăрат̆,** тесе хăварђĕ.

Халђ снапшени ыйтăвĕсем, тата Снапшени Халăх Кăмиссариађĕпе потрепиттĕл копператси оркăнĕсен ĕçне çĕнетсе орканисатсилес ыйтусем çине куçатăп. Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнђи прокрамăна пурнăçа кĕртес ĕçре Снапшени Халăх Кăмиссариађĕн оркăнĕсемпе потрепиттĕл копператси питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та Тĕпкомпа Тĕп Контрођ Комиççин пленăмĕ вăл ыйтусем çинђе нумай ђарăнса тăђĕ. Рапођђисене кирлĕ таварсем, апат-çимĕç кирлĕ таран тăратас ĕçе пĕтĕмпе Снапшени Халăх Кăмиссариађĕпе копператси туса пыраççĕ. Çавăнпа та Снапшени Халăх Кăмиссариађĕн оркăнĕсемпе потрепиттĕл копператсин хăйсен ĕçĕсене пађах урăхлатса çĕнетсе йарас пулат̆. Копператсин хатĕр протуктăсене валеçмелле кăна мар, копператсин рапођђи снапшени вађђи кирлĕ йалхуçалăх протуктисем тăвас тĕлĕшпе те ĕçлемелле. Копператсин ĕçне аванлатас ыйту—реађнай ĕç укçине кăтар-

тас, ĕçхалăхĕн пурнăç условисене аванлатас ыйту пулса тăраť. Хаљхи вăхăтра Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕн оркăнĕсемпе копператси оркăнĕсем вăл сатаҕсене пурнăçа кĕртсе çитерсе пыраймаççĕха. Потрепиттĕл копператси хăйĕн ĕçĕсене рекконструкси тапхăрĕнҕи сатаҕсем майлă урăхлатайманни, копператси ĕçĕнҕе непмăнла шăрш пурри çинҕен Парттин 16-мĕш сиесĕнҕе Сталин йулташ та каланă.

Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиççин пĕрлешўллĕ пленăмĕ Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕн Аш-какай сойусĕпе Пахҕа-çимĕç сойусĕн йĕрĕпе пулса пыракан ĕçĕсене пĕртте çителĕклĕ мар тесе хакларĕ. Тĕпсойуспа потрепиттĕл копператсин вырăнсенҕи ĕçĕсем çителĕклĕ маррине те палăртнă. Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиççин пленăмĕ хăйĕн постановленинҕе Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕн Аш-какай сойусĕн, тата Пахҕа-çимĕç Сойусĕн аппараҕĕсем йут, тăшманла, вретиттĕлле елементсемпе çўпленсе кайнине палăртрĕ. Потрепиттĕл копператсинҕе ĕç хăйне тĕллĕн, плансăр пулса пынă, ҕăн-ҕăн ҕĕрĕ ĕçе пўрократтисăм, ĕçри оппорттунисăм çисе йарса пынă, çавăнпа та промтаварсем çитмен çĕртех хăшпĕр çĕрте сатторсем пулса пынă. Пĕрлешсе апатланас ĕçе, хуласем çумĕнҕе çимĕç пахҕисем тăвас ĕçе орканисатсилесси, т. ыт. çине кирлĕ таран çавăрăнса пăхман, ĕç плансăр пулса пынă, копператси опшҕественнăçне ĕçе хутшăнтарман, тĕрĕслессине орканисатсилемен. Копператси опшҕĕçтвĕннăçне мопилисатсилес, актива орканисатсилес вырăнне — копператси суйлавлă копператтивсене пĕтерсе лартнă. Тĕпком çав пĕтерсе лартнă суйлавлă копператтивсене çĕнĕрен пуçласа йама, Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕн оркăнĕсемпе копператсине йут, тăшманла, вретиттĕлле елементсенҕен хăвăрттăн тасатма, хăйсене ĕçре палăртнă катăрсене вытвишени туса — Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕпе копператси оркăнĕсен ĕçĕнҕе халех улшăну тума йышăнҕĕ.

Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиççин пĕрлешўллĕ пленăмĕ пулса иртнĕренпе ҕылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, анҕах копператси ĕçĕ пирĕн пит наҕар улшăнаťха. Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиççин пленăмĕ палăртнă çитменлĕхсем пирĕн копператсин те пур вĕсем. Пĕтĕм потрепиттĕл

копператсипе Снапшени Халăх Кăмиссариаҕĕн оркăнĕсен хăйсен ĕçне хăвăрттăн улшăнтарма тытăнмаллаҕҕĕ, анҕах ĕç малалла пит наҕар шăваť. Тавар хатĕрĕсене реалисатсилес ĕç питĕ йурăхсăр пыраť, таварсене хăвăрт реалисатсилес ĕçе нийепле те йĕркелеме пултараймаççĕ. Тавар саппасĕсем пысăклансӑх пыраççĕ. Çак вăхăтра 5 мĕлйунлăх таварсем пур. Кун пек саттор туни потрепиттĕл копператсин оркăнĕсем хăвăрт çавăрăнкалайманнинҕен, ĕçри пӳрократтисăмран, ĕçре сылтăм сулăнҕăклăх пурринҕен килет; непмăнла йăласене пĕтерес ĕçе йапăх туса пыратпăрха. Ҕăвашсойус ĕçне Ҕăвашсойус тупăш мĕн ҕухлĕ илнине пăхса хакланӑ вăхăтсем пулнӑ вĕтха. Ĕçе кирлĕ пек туса пыма пултаракан çынсене суйласа лартасси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман, ĕçлекенсене сăнаман. Партти ҕленĕсем хамăршăн йут çынсене хӳтĕлени пулнӑ. Кирлĕ таварсене кирлĕ таран хатĕрлесе кӳрес, хуласем çумĕнҕе çимĕç хуçалăхĕсем орканисатсилес, т. ыт. çавнашкал ыйтусемпе партти ҕленĕсем кирлĕ пек ĕçлемен. Профсойуссем те ку тĕлĕшпе нумайах туман.

Аш-какай, пахҕа-çимĕç кирлĕ таран тăратас ĕç ҕăтма çук йапăх пыраť. Кунта пирĕн вретиттĕлствӑ пур, аш-какай хатĕрлес ĕç планĕсене темиçе хут çĕнĕрен тумалла пулнӑ. Выљăх-ҕĕрлĕхе, пахҕа-çимĕçсене турттарнӑ ҕух пурлăх пĕтни нумай пулнӑ. Выљăхсем вилнĕ, çимĕçсем пăсăлнӑ, тата ытти те.

Тĕпкомпа Тĕп Контроль Комиççин пленăмĕ, çак çитменлĕхсене палăртса, аш-какай хатĕрлес ĕçе татăклăн улăштарса хăвăртлатма хушса хăварҕĕ. Апрелĕн 1-мĕш патне çулталăк планне 70 проҕҕăнран кайа мар тултарма хушрĕ. Анҕах, аш-какай хатĕрлес плана епĕр пурнӑça мĕнле кĕртетпĕрха? Ҕăтма çук йапăх. Йанварĕн 20-шĕ патне плана пĕтĕмпе те 6,8 проҕҕăн çеç тултарнӑ. Кулак хуçалăхĕсене çирĕп сатанисемпе паҕах сахал çавăрса илнĕ. Ĕçсем кун пек пынине ҕăтма çук. Тырпул хатĕрлес ĕçри оппăтсене пĕтĕмĕшпех аш-какай хатĕрлес ĕç çине куçарса, апрељ уйăхĕн пĕрремĕш патне плана 70 проҕҕăнран кайа мар тултармалла. Пахҕа-çимĕçсем хатĕрлес ĕç те йурăхсăр наҕар пыраť. Тӳррипе каласан, ку ĕçе тăвасах тесе ĕçлемен те,—сăмахпа калаç-

-нипех ђаранна. Ку уроксене лайаххан шута илсе—малалла кунашкал çитменлĕхсене тума йурамасть. Ку çитменлĕхсемпе кĕрешме опђĕствăннăçа пиђет те кирлĕ пек мопилисатсилемен.
-в Тĕпкомпа Тĕп Контроъ Комиççи пленăмĕ йышăннă тăрăх, пирĕн копператсин хула çумĕнђе çимĕç пахђисем тăвас тĕлĕшпе хыттăн ĕçлеме тытăнмалла. Вăл пахђасем промышлĕннăçлă ђенттăрĕсем йĕри-тавра 25 çухрăма таран пулмалла. Ку ĕçе тума пĕтĕм профсойус массине мопилисатсилемелле. Çĕрĕç Кăмиссариађĕн, тата ытти оркăнсен çимĕç пахђисем тăвас ĕç çине пўрократла пăхма йирахмалла.
-в Тата претприйаттисемпе уђрештенисем çумĕнђи хупă лапкасем (закрытые распределители) çинђен те каламалла. Ку ыйту çинђе Тĕпкомпа Тĕп Контроъ Комиççин пленăмĕ ђылай ђаранса тăђĕ, мĕншĕн тесен рапођђисене валъђи кирлĕ таварсене кирлĕ таран тăратассине пирĕн промфинплансене тултарассипе, ĕç тухăçлăхне хăпартассипе, ĕç вăйĕ йухăннипе кĕрешес ĕçпе, тата сотсиалисăмлă ăмăртупа утарнĕђђĕствăна пахалассипе çыхăнтарса пымалла. Ку ĕçре хупă лапкасем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Протуктăсене клас çулйĕрне тытса пырса валеçес ĕç форми йенђен пăхсан—хупă лапкасем питĕ аванни ĕçре курăнђĕ. Анђах вĕсен ĕçĕнђе, кунпа пĕрлех, çитменлĕхсем те нумай: ђас-ђасах вăл лапкасенђе таварсем çук, ђеретсене пĕтерес вырăнне вĕсенђе хўресем усаççĕ. Таварсене валеçессине йаланах ђылай промфинплансене тултарассипе çыхăнтармаççĕ, хупă лапкасене кирлĕ хак паман оппортунисла шухăшсем пĕтсе çитменха. Пирĕн вăл хупă лапкасене лайăх ĕçлекен тумалла, хупă лапкасем тăвас шухăша пăсакансемпе вирлĕн кĕрешмелле. Утарнĕксене таварсем ытларах паниче—рапођђисем хушшинђе класлă сăйсем туни—тесе хак паракансене пирĕн хирĕç тăрса вирлĕ ответ памалла. Промфинплана кам тултарать—тавара пуринђен малтан çавна пама кирлине лайăх ăнланса илес пулать. Савăт хăйĕн промфинпланне тултарнă пулсан—вăл савăтри рапођђисене пахаламалла. Савăтри тсех, йе утарнăй прикатăсемпе утарнĕксем промфинплансене тултараççĕ пулсан—вĕсене пахаламалла. Çавăнпа та хупă лапкасем çине пит

те вирлĕн çавăранса пăхса вĕсен ĕçĕнҫи çитменлĕхсене пĕтермелле. Пирĕн хупă лапкасем халлĕхе ахаҫ лапкасенҫен нумайах та уйрăм марха. Вĕсенҫе вăрланисем, таварсене пытарса йулнисем, т. ыт. те пур. Куи пек фактсене пуçĕпех пĕтермелле. Тĕпкомпа Тĕп Контроҫ Комиççин пленăмĕ пысăк претприйаттисенҫе уйрăм хупă копператтивсем орканисатсилемелле тесе йышăнҫĕ. Снапшени ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе ку решшени питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраĭ. Тĕпкомпа Тĕп Контроҫ Комиççи копператсин йалти ĕçне тĕпренех аванлатма, коператтивсен ĕçне массăсене хутшăнтарса—ăна йалхуçалăхне сотсиалисăмла урăхлатса тăвас ĕçе пăхăнтарса пыма хушрĕ. Тĕпкомпа Тĕп Контроҫ Комиççи пленăмĕ промышлĕннăç таварĕсене пуринҫен ытла колхоçнĕксене парса—кăна тырпул акса тăвас, тата йалхуçалăх протуктисене хатĕрлес плансене пĕтĕмĕшпех тултарассипе çыхăнтарса пыма хушса хăварҫĕ. Йалти копператсире йертсе пыракан вырăна колхоçнĕксем йышăнмалла, анҫах ку сатаҫа епĕр пурнăçа наҫар кĕртетпĕрха. Рапоҫҫисем ваҫҫи лайăх пĕçернĕ çăкăр тăратассине те епĕр йĕркелейменха. Вăрман хатĕрлес ĕçре ĕçлекен рапоҫҫисене апат-çимĕç тăратасси йĕркеллĕ пулса пымасĭ. Рапоҫҫисене пирĕн лайăх апат-çимĕç çитерес пулаĭ. Пĕрлешсе апатланассине пирĕн сарсах пымалла. Халăх хуçалăхĕнҫи сотсиалисăмла çектăр уйрăмлă çектăртан нумай пысăк вырăн йышăнса тăнă, çăкăр, тата ытти протуктăсем çурри ытла пĕрлешт. рнĕ происвотствă урлă пынă ҫух—çак условисенҫе потрепиттĕл копператси йышăнса тăракан вырăн нумай пысăкланаĭ. Çавăнпа та, Комуниссен парттин Тĕпкомĕпе Тĕп Контроҫ Камиççин, тата Крайри Комиттетăн пленăмĕсем йышăннисене асра тытса, потрепиттĕл копператсин ĕçне пирĕн хăвăрттăн улăштарса çĕнетмелле. Снапшени ыйтăвĕсем промфинплансене, тата пахалăх кăтартăвĕсене тултарас ыйтусем пекех паллă вырăн йышăнса тăмалла.

Малалла тĕрлĕ протуктăсем хатĕрлес ыйту çине куçатăп. Йалхуçалăх протуктисене хатĕрлес ĕç çине епĕр сотсиалисăм тăвас ĕçĕн пĕтĕм сатаҫĕсенҫен уйрăмăн пăхма пултараймастпăр. Пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнҫи прокрамăна тултарас ĕçре тырă, тата ытти йал-

хуçалăх протуктисем пысăк вырăн йышăнниса тăраççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн рапоҫҫисене ваҫҫи апат-çимĕç, претприйаттисем ваҫҫи ҫĕрĕ тавар (сырйо) кирлĕ таран хатĕрлесе тăратмалла.

Тырă хатĕрлес тĕлĕшпе йулашки çулсенҫе епĕр пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Клас тăшманĕсемпе, кулаксен сапотташĕпе, сылтăмалла, тата «сулахайалла» сулăнакансемпе вирлĕн кĕрешсе пырса, епĕр, пĕтĕмĕшпе илсен, тĕш тыра кирлĕ таран хатĕрлес сатаҫа пурнăçа кĕртрĕмĕр. Хаҫхи вăхăт патне Совет сойусĕпе 1 мĕлйарт пăт тырă хатĕрленĕ. Хамăр крайра илсен—тырă хатĕрлес тĕлĕшпе кунта та пысăк çитĕнӳсем тунă. 1931-мĕш çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне край тăрăх, пĕлтĕрхипе танаштарсан тырă 116 проҫҫăн, пахҫа-çимĕçсем 158 проҫ., çĕрулми 54 проҫҫăн хатĕрленĕ. Анҫах ку хăвăртлăхсем пĕртте çителĕклĕ мар, йанварĕн 1-мĕшĕ патне плана пĕтĕмпе те 92 проҫҫăна йахăн çеç тултарнă. Епĕр хамăр республĕкре те йапăх хатĕрлетпĕр. Пĕлтĕр коллективисатсипе тырпул кунĕ патне тырă хатĕрлес плана пĕтĕм 100 проҫҫăнĕпех тултарнăҫҫĕ, кăçал йанварĕн 20-шĕ тĕлне те 95 проҫҫăн çеç тултарнă. Технĕкле куҫттурăсене, пахҫа-çимĕçсене илсен—ĕç татах та йапăх. Сăлтавĕсем çаксем: хатĕрлемелли протуктăсем хăйсемех пухăнасси çине шанни (самотек), оппортунисла практĕк, тата кулак куçĕнҫен ӳкесрен хăрани.

Хаҫ иртерекен хуçалăхпа политтĕкле кампанисем раиоҫҫи класăн, колхоçнĕксен, ҫухăнпа вăтам хресҫен массисен калама çук пысăк хастарлăхне, вĕсем парттипе Совет влаçне хыттăн шанса тăнине кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах хуçалăх планĕсене тултарасси калама çук наҫар пырат. Кун пек уйрăмлăх мĕнрен пулса пыратха? Мĕншĕн тесен ĕçе урăхлатса çĕнетмен, рукковотствă конкретлă мар, массăсен активлăхне кирлĕ пек йертсе пыни çук, кулаксене тивĕçлĕ хирĕçле ответ çителĕклĕ памаççĕ, уйрăм парторканисатсисем оппорттунисăмпа, самоттокпа пĕртте çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Çавăнпа та партти, советпа хуçалăх, колхоспа копператтив, профсойуспа комсомол орканисатсисен ĕçĕсене хăвăрттăн урăхлатса çĕнетни кирлĕ. Оппортунисăмпа, ĕçри сылтăм сулăнҫăкпа, «сулахай» пăрăнҫăксемпе кĕрешессине вăйлатмалла,

клас çулйĕрне çирĕпрех тытса пырассине комунисла сисĕмлĕхе вăйлатмалла. Пур аппаратсенҫен те йут, сăтăрçă оппортунисла елементсене тасатса кăлармалла. Аппаратсене çĕнĕрен ĕçлекенсемпе вăйлатмалла, çирĕплетмелле. Çак çитес вăхăтрах пирĕн йалхуçалăх протуксисем хатĕрлес плансене тултармалла. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне аш-какай хатĕрлес плана 70 проҫҫăнран кайа мар тултармаллине пирĕн лайăх астăвас пулаť. Тĕпкомпа Тĕп Контролҫ Комиççин, Крайкомăн пленăмĕсем снапшени, тата протуктăсем хатĕрлесси çинҫен йышăннисене пирĕн çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пымалла. Ку ыйтусем çинҫе епĕ текех ҫарăнса тăмăп ĕнтĕ, мĕншĕн тесен пленăмăн ĕç йĕркинҫе ун пирки уйрăм ыйтусем тăраççĕ.

Халҫ советсен ĕçĕсем çине куçатăп. Тĕпкомпа Тĕп Контролҫ Комиççин пленăмĕ Советсен ĕçĕсем çинҫе калама çук нумай ҫарăнса тăҫĕ, мĕншĕн тесен реконструкси тапхăрĕ, тата сотсиалисăмла економĕкĕн никĕсне туса çитерес сатаҫсем Советсен ĕçне çӳлтен пуçласа айала çитиҫҫенех урăхлатса çĕнетме хушаççĕ,—çав вăхăтрах советсем хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетес ĕçре калама çук кайа йулса пыраççĕ. Теккапĕрти пленăм: советсен ĕçне урăхлатас ĕç советсем парттин тĕп çулйĕрне пурнăçа кĕртсе пыракан пулса тăрса, сылтăмпа «сулахай» оппортунисăма хирĕç вирлĕн кĕрешсе пынине вăйлатнипе кăна пулса пыма пултараť тесе хăварҫĕ. Çавăнпа та Тĕпкомпа Тĕп Контролҫ Комиççин пленăмĕ советсен суйлав кампанине парттин ленинла политтĕкне пурнăçа кĕртнĕ çĕрте советсем йышăнса тăракан вырăна пысăклатас, тата советсен ĕçне татăклăн улăштарас лосăнкпа туса ирттерме йышăнҫĕ. Советсен ҫăннипех утарнĕҫҫĕствă, колхос йухăмĕ йенелле питпе çаварнас пулаť. Советсене хамăршăн йут, тăшманла, оппортунисла елементсенҫен тасатса пырса—пирĕн советсене утарнĕксене, малта пыракан колхоçнĕксене, ҫухăнсемпе вăтамсене кĕртсе пымалла. Советсен вырăнти активне хатĕрлес ĕç çине ҫăннипех çавăрăнса пăхмалла, хут çине çырнипе лăпланма йурамасť. Советсенҫен сотсиалисăмла строиттĕлствăна йертсе пыракансем тумалла. Çакăншăн пирĕн хытă çапăçмалла.

Пĕтĕм фронтпа, сарлакан наступлени туса пыракан

сотсиалисăма хирĕç капиталисăмла елементсемпе кулак сен йулашкийĕсем калама çук хытă тăраççĕ. Çавăнпа та патшалăх аппаратĕнђе те вак-пуршуалла йухăм, клас тĕлĕшĕнђен йут, тăшманла елементсем хирĕçни палăрат̆. Кăна пурин те ăнланса илмелле. Ăнланса илсе— советсем парттин ленинла политтĕкне пурнăça кĕртес тĕлĕшпе йышăнса тăракан вырăна пысăклатмалла. Совет оркăнĕсенђе сылтăм оппортуниссем, принтсĕпсĕр килĕшекенсем валђи вырăн пулмалла мар. Çавăнпа та советсен ĕçне урăхлатас ĕçре пирĕн виçĕ йĕрпе кĕрешсе пымалла:

1. Сăтăрçăсен тымарĕсене, тата контрреволђутсиллĕ елементсене татăклăн кăларса ывăтса пымалла;.

2. Пролеттарилле темократтине сарса тĕрлĕ тĕслĕ пӳрократтисăма хĕртнĕ тимĕрпех çунтарса кăлармалла;

3. Оппортунисăмпа ним хĕрхенмесĕр кĕрешсе пымалла.

Çак условисем пулсан кăна советсем рекконструкси тапхăрĕнђе хăйсен умĕнђе тăракан сатађсене пурнăça кĕртсе пыма пултараççĕ.

Ĕçри ђи паллă меттăтсенђен пĕри—вăл ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслесси, тата ĕçе ђăннипех кирлĕ пек тума пултаракан çынсем тупса лартасси пулмалла. Ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслес тĕлĕшпе епĕр питĕ сахал ĕçлетпĕр. Йышăнакан решшенисем ђас-ђасах хут çинђе кăна тăрса йулаççĕ. Ленин йулташ ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслесе, тата тивĕçлĕ çынсем тупас ыйтăва питĕ пысăк вырăна хунă. «Халăх Кăмиссарĕсен Канашĕпе Ĕçпе Сыхлăх Советђĕн ĕçне çĕнĕлле йĕркелесси çинђен» Тсӳрӳппă йађĕпе çырса йанă çырура вăл акă мĕн каланă: «Халăх Кăмиссарĕсен Канашĕпе Ĕçпе Сыхлăх Советђĕн тĕп çитменлĕхĕ—вăл ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслес ĕç çукки. Хутсем çырни, текретсем çинђен калаçни, текретсем çырни пире пӳрократтисăм çĕрĕк шурлăхне туртса кĕрсе кайат̆, çав хут тинĕсĕнђе ђăн-ђăн ђĕрĕ ĕç пуҫса ларат̆». Тепĕр вырăнта Ленин çапла çырат̆: «Халăх Кăмиссарĕсен Канашĕпе Ĕçпе Сыхлăх Советне вунă хут çирĕплетес пулат̆... халăх кăмиссарĕсем унта пур вак-тĕвек ĕççене ан илсе пыђђĕр, вĕсене хăйсемех татса вĕсемшĕн хăйсем ответ тытђĕр».

Ленин йулташăн çак кăтартуне пирĕн пурнăça кĕртсе

пырас пулаҫ. Тсехсем, претприйаттисем, пур советпа хуҫалăх, колхоспа копператтив, профсойус, комсомол, партти органисатсисем ĕҫе мĕнле туса пыни ҫине пуринђен ытла ҫавăрăнса пăхас пулаҫ. Вĕсен кашнин миҫе-шер йышăну пур? Илер, акă, сотсиалисăмлă ăмăрту токăвăрĕсене, промфинпланĕсене тсеха ҫитересси ҫинђен йышăннисене, т. ыт. те. Ђас-ђасах вăл решшенисем хут ҫинђе ҫеҫ тăрса йулаҫҫĕ. Хăш-пĕр претприйаттинђе, сăмахран, парттипе комсомол ђленĕсем сотсиалисăмлă ăмăртупа утарнĕђђĕствăна мĕн ђухлĕ хутшăннине кăтартакан ҫветенисем те ҫук. Ђас-ђасах пахалăх кăтартăвĕсем ҫинђен ҫветенисем тупма ҫук. Йалхуҫалăхне хăпартас, коллективисатсине сарас тĕлĕшпе йышăннă ђи паллă текретсем пурнăҫа мĕнле кĕрсе пынипе те ђас-ђасах тĕрĕслемеҫҫĕ.

Илер акă колхоссене ҫамăллăхсем парасси ҫинђен йышăннă текрета. Вăл текрет пурнăҫа мĕнле кĕрсе пыраҫха? Ку текрет мĕнле пурнăҫа кĕрсе пынине халлĕхе тĕрĕслеменха. Ҫавăнпа та Тĕп Контрођ Комиҫҫипе Ĕҫлекенсемпе Хресђенсен Инспексийĕ вăл текрет пурнăҫа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесси ҫинђен кăтарту пађĕ. Колхоссенђе тупăшпа тырпула валеҫесси ҫинђен Тĕпком панă кăтартăва епĕр пурнăҫа мĕнле кĕртетпĕр? Халлĕхе пит йапăх. Совет сойусĕн Ҫĕрĕҫ Кăмиссариађĕн 3-мĕш номĕрлĕ своткинђе Ђăваш Респуплĕкĕнђи пур колхоссенђен 75 прођђăнĕ ҫеҫ тырпула валеҫнĕ.

Йетинонаđали ҫинђен, ĕҫ тистсиплинне хăпартасси ҫинђен, рапођђи снапшенине аванлатасси ҫинђен, т. ыт. ҫинђен панă кăтартусем пурнăҫа мĕнле кĕрсе пынине вăхăтра тĕрĕслемеҫҫĕ. Кунта вара—промфинплансене, пахалăх кăтартăвĕсене пурнăҫа кĕртменни сиксе тухаҫ.

Халĕ ĕнтĕ ĕҫ ваљђи тивĕҫлĕ ҫынсем тупса пырасси ҫинђен. Кун пирки темĕн ђухлĕ решшени йышăннă, вытвишени ҫинђен те калама ҫук нумай калаҫнă,—анђах ҫапах та, ĕҫ малтанхи хăвăртлăхсемпех пыраҫ. Ĕҫ ваљђи тивĕҫлĕ ҫынсем тупасси ҫине нумайĕшĕ ҫийелтен кăна пăхаҫҫĕ. Нумайĕшĕ: претҫетаттĕлпе хăшпĕр рукковотиттĕлсене суйласан ĕҫ пулаҫ те вара,—тесе шутлаҫҫĕ. Ĕҫ ваљђи тивĕҫлĕ ҫынсем тупасси ҫине кун пек пăхма йурамасҫ. Ку ĕҫ ҫине ҫавнашкал пăхсан ĕҫ пулмарĕ вара

вăл. Ĕç ваљђи тивĕçлĕ çынсем тупасси—вăл уйрăм станокран, тсехран, претприйаттирен, йалсоветран, Райĕçтăвкомран, т. ыт. пуçласа кашни ĕçе ваљђийех вăл ĕçе ђăннипех, кирлĕ пек тума пултаракан çын тупса лартмаллине пĕлтерет, вăл çын хăйĕн ĕçĕшĕн ответ тыттăр, анђах кăна ваљђи вăл çынна мĕн-мĕн тумаллине вĕрентес пулаť. Ĕçе ваљђи çынсем тупасси—массăна вĕренессине, массăна вĕрентессине, вăл массă хушшинђен малтарах пыракансене ним иккĕленмесĕр вытвишени туса пырассине пĕлтерет. Ĕçе ваљђи çынсем тупасси—вăл комунисла вăйсене кирлĕ пек, тивĕçлĕн, йĕркелĕн вырнаçтарассине пĕлтерет. Кашни тсех, претприйатти, колхос, совхос, йалсовет, уђрештени, т. ыт. те ĕçпе партти йертсе ныма пултаратпăр.

Пур комунисла, активлă вăйсене пĕр çĕре пухса тепĕр уђаскăна ахаљ хăварма йурамасť. Пур хастарлă вăйсене кăнтăрлахи çменăна йарса—каçхи çменăна пушă хăварма йурамасť.

Çменăсене йапăх орканисатсиленĕ пирки пулакан инкек-синкексене пирĕн йулташсем шута илеççĕ-ши? Çменă пулнă ђух пĕрисем иртерех кайаççĕ, теприсем кайарах йулса пыраççĕ те—вара простойсем, прорывсем пулса кайаççĕ. Тата ĕçе ваљђи çынсем кирлĕ таран тупнипе сахал, вĕсене йертсе пырас пулаť. Анђах руководтствăна аванлатмасăр, ĕçе урăхлатса, татăклă тумасăр—йертсе пыма çук. Çавăнпа та ĕçри сăнавсене шута илесси, ĕçе вăхăтра урăхлатса çĕнетесси калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраť. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Тĕпкомпа Тĕп Контроль Комиççин пленăмĕ ĕçе урăхлатса çĕнетесси çинђе нумай ђарăнса тăђĕ.

Халĕ партти ретĕнђи ĕççем çине куçатăп. Епĕр хамăр çĕршыври ӳсĕмсене парттин тĕп çулйĕрне тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пынипе, сулăнђăксемпе икĕ фронтпа та, тата клас тăшманĕсене хирĕç вирлĕн кĕрешсе пынипе çеç тума пултартăмăр. Йухăнса кайнă халăх хуçалăхне ура çине тăратнă вăхăтра пирĕн тротскисăмпа кĕрешмелле пулђĕ. Кайран вăл тротскисăм контрреволютсиленсе кайрĕ. Тротскисăм парттине пуççăрла ĕççем тума, хресђенсенђен уйăрлма сĕнђĕ. Партти кăна пĕтĕмпех палăртса контрреволютсиллĕ тротскисăма аркатса

тăкрĕ. Рекконструкси тапхăрĕнҫе пирĕн парттин парттиăшĕнҫе 'клас тăшманĕн акĕнҫĕ пулса тăракан сылтăм сулăнҫăкпа кĕрешессине сарса йамалла пулҫĕ. Сылтăмрисем ҫĕнтерни—ҫĕршыва интустрилес, йалхуҫалăхне коллективлас ĕҫĕн хăвăртлăхĕсене ҫакарни, кăпитталила елементсене вăйлатни пулнă пулĕҫҫĕ. Пур клас тăшманĕсем те: кулаксем, непмăнсем, сăтăрҫăсем сылтăмрисем ҫĕнтерессине шанса, ку майпа реставратси тума никĕс пуласса ĕмĕтленсе тăнă. Сылтăмрисем ĕҫре кулаксен прокрамне пурнăҫа кĕртсе пынă, вĕсем хĕсĕк вырăнсемпе танашма ҫĕнҫĕҫ, интустриалисатси хăвăртлăхĕсене ҫакарма сĕнҫĕҫ, вĕсем совхоспа колхос строиттĕлствине хирĕҫ кĕрешрĕҫ, кулак сăмаххисем хыҫҫăн кайса вĕсем парттине есĕр хресҫенсене вăрҫăллă-феоталлă вăхăтри пек пусмăрлаттăр тесе айăпларĕҫ. Парттине Ленинла ҫулйĕртен пăрса йама тăрăшса вĕсем Тротски майлă пулнă ҫынсемпе ҫыхăнса ĕҫлеме тапратрĕҫ. Партти, ку таранҫҫен тунă ӳсĕмсен никĕсĕ ҫинҫе кăпитталисла елементсене хĕстерсе пырас политтĕкрен талкăшпех колхоса куҫнă май кулаксене класĕпех пĕтерес политтĕк ҫине куҫсан, сылтăм оппортуниссем парттине йертсе пыракан оркăнсене хирĕҫ тата хытăрах аттаккă тума пуҫларĕҫ. Партти сылтăм сулăнҫăка аркатса пăрахса—калама ҫук пысăк ӳсĕмсем турĕ. Епĕр ĕнтĕ сотсиалисăм тапхăрне кĕрсе ЕҪП-ĕн йулашки сыпăкĕнҫе пурăнатпăр. 1931-ш ҫулта пирĕн сотсиалисăмлă еккономĕкĕн никĕсне туса ҫитермелле. Ҫак ӳсĕмсене пурне те икĕ фронтпа, пуринҫен ытла хаљхи вăхăтра ҫи пысăк хăрушлăх пулса тăракан сылтăм сулăнҫăкпа кĕрешсе кăна тума пултарнă епĕр. Сылтăм сулăнҫăка аркатса йанă, анҫах вăл пурăнатха, пĕтмен, мĕншĕн тесен вăл класĕпех пĕтерекен кулаксен шухăшĕ, унăн тӳрĕ акĕнҫĕ пулса тăрат. Рыккăвпа Пуххарĕн йулташсем Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Комиҫҫин пленăмĕнҫе тухса каланисем вĕсем парттин тĕп ҫулйĕрĕ патнелле пĕр утăм йарса пуснине кăтартрĕ, анҫах вĕсем тухса каланисенҫе пољшевикла ҫирĕплĕх, тасалăх пулман. Рыккăв йулташ тухса калани—вăл Совет патшалăхне йертсе пыракан пулма пултарайманнине кăтартрĕ. Ҫавăнпа та Тĕпкомпа Тĕп Контрољ Камиҫҫин пленăмĕ Рыккăв йулташа Тĕпком Политпӳрон ҫленĕн-

ҫӗн, тата Совет Сойусӗн Халӑх Комиссарӗсен Канашӗн претҫетаттӗлӗнҫен кӑларса питӗ тӗрӗс ӗҫ турӗ. Рыккӑвпа Пуххарӗн йулташсем, вӗсем ӗлӗкрех тухса каланисемпе Тӗпкомпа Тӗп Контролҫ Комиссин пленӑмӗнҫе тухса каланине танаштарсан—пӗр утӑм малала йарса пусрӗҫ, анҫах вӗсен хӑйсен сӑмахӗсене ӗҫпе кӑтартас пулаӗха. Ку—сылтӑм сулӑнҫӑкпа кӗрешес ӗҫе кӑшт та ҫакарма пултармаст. Сылтӑмпа «сулахайрисен» принтсӗпсӗр пӗрлешӳне (плокне) тӑрӑ шыв ҫине кӑларни—Сталин йулташ пит те тӗрӗс каланине кӑтартрӗ. 1928-ш ҫулхи нойапӗр уйӑхӗнҫе пулса иртнӗ Тӗпком пленӑмӗнҫе Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

«Тротскисен пӗрлешӗвӗ (плокӗ) ҫулталӑк кайалла арканса карӗ. Сылтӑмрисенҫен хӑшпӗрисем, Шатуновски йулташ пеккисем вӑл пӗрлешӳрен пӑрӑнса карӗҫ. Ӗнтӗ, малашне сылтӑмрисем уйрӑмӑн, сылтӑм лосӑнксемпе тухаҫҫӗ, «сулахайрисем» хӑйсен сылтӑмлӑхне сулахай халапсемпе витеҫҫӗ. Анҫах сылтӑмрисемпе «сулахайрисем» пӗр-пӗрне каллех тупмӗҫ тесе шанма пулаӗи? Ҫук, кунта нийепле шантару та пулма пултараймаст».

Акӑ, курӑр ӗнтӗ. Сталин йулташ ҫак сӑмахсене каланӑранпа вӑхӑт нумайах та иртмерӗ—сылтӑмри Сыртсовпа «сулахайри» Ломинатҫе пӗр-пӗрне тупрӗҫ. Ҫак сылтӑмпа «сулахайрисен» принтсӗпсӗр пӗрлешӗвӗ, класӗпех пӗтерсе пыракан кулаксен шухӑшӗсене палӑртса, унӑн акӗнҫӗ пулса тӑрса, икӗ питлӗ политтӗк тытса—парттин тӗп ҫулйӗрне хирӗҫ тухса парттин тӗп ҫулйӗрне ревиҫилеме тӑҫӗ. Вӑл плок ҫапла калама тытӑнҫӗ: сотсиалисӑм таптӑрне епӗр кӗменха, строиттӗлствӑ фронтне пӗҫӗклетмелле, т. ыт. те, т. ыт. те,—пӗр сӑмахпа—тротскиссен, тата сылтӑм оппорттуниссен сӑмаххисене тепӗр хут каларӗ. Сылтӑмпа «сулахайрисен» принтсӗпсӑр плокне парттин калама ҫук ҫирӗппӗн хирӗҫле ответ паҫӗ. Малашне пирӗн парттин тӗп ҫулйӗрӗнҫен пӑрӑнакансемпе, пуринҫен ытла халҫхи вӑхӑтра ҫи пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑракан сылтӑм сулӑнҫӑкпа, «сулахай» пӑрӑнҫаксемпе, контрреволҫутсиллӗ тротскисӑмӑн йулашкисемпе, тата вӗсемпе килӗшекенсемпе кӗрешессине татах вирлӗн вӑйлатса пымалла. Парттине сулӑнҫӑксемпе, клас тӑшманӗсемпе кӗрешес ӗҫре хурҫӑлантарса, теорине вӗренессине ҫӳлерех

хăпартса пырса, массăна мопилисатсилесе, орканисатсилесе пырса çеç епĕр пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнђи прокрамăна пурнăça кĕртме пултаратпăр.

Илер хамăр орканисатсине. Пĕтĕм парттипе пĕрле пирĕн орканисатси парттин тĕп çулйĕрĕнђен пăраннисемпе вирлĕн кĕрешсе пынă. Епĕр натсионал-темократтилле, пуршуаллă теорине тăрă шыв çине кăлартăмăр, епĕр унăн тымарĕсене палăртрăмăр, пирĕн парторканисатси ăшĕнђе епĕр сылтăм оппортунисла сулăнђăка—елменевшђинăна палăртса вăл сулăнђăка калама çук вирлĕн хирĕçле ответ патăмăр. Теори йенђен илсен—епĕр натсионаллă шовинисăмпа сылтăм сулăнђăка тĕппех палăртрăмăр ĕнтĕ, анђах ĕçри сылтăм оппорттунисăма пĕтерейменха. Йалхуçалăх налокне кулак хуçалăхĕсем çине уйăрăмăн хуни пĕр прођђăнран ытла марри мĕне пĕлтересха? Кулак хуçалăхĕсене тырă, аш-какай, т. ыт. протуктăсем хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăм сатанисем пани Респуплĕкĕпе 3 прођ. кайа иккенни мĕне пĕлтеретха? Кулак хуçалăхĕсем çине çирĕп сатанипе хунисене вăхăтра шырасса илменни мĕне пĕлтеретха? Парттин класлă çулйĕрне çавнашкал тата тĕрлĕрен пăснисем пулни мĕне пĕлтеретха? Кĕçĕнйелђĕк районĕнђи йалсенђе ĕçлекенсене опђăллă пукçир йĕркипе Шăмăршă районне йарсан, унти орканисатсисем вĕсене пĕртте пулăшманни мĕне пĕлтерет? Çитменнине, вĕсене ђи конçерваттивлă йалсене йанă, вĕсем унта пурĕпĕр пĕр кĕренкке тырă та хатĕрлес çуккине кĕтнĕ. Çав вăхăтрах, Кĕçĕнйелђĕк районĕнђен пынă икĕ йалти ĕçлевçĕ колхоçнĕксен, ђухăнсемпе вăтамсен массине орканисатсилесе пĕр буна кун хушшинђех çултаlăклăх плана 20 прођђăн тултарнă. Вăл районрах тырă хатĕрлес тĕлĕшпе ђенттăртан пынă упполномођђĕннăйсем ĕçленĕ, анђах ĕçе пĕрте малалла йаман. Шăмăршăрисем хăйсем тырă хăй йухса пырасса кĕтсе, ђенттăртан тырă хатĕрлемелли плана ђакарма ыйтса макăрнă. Куçпек фактсене питĕ нумай кăтартса пама пулаť, анђах кăсем те ĕçри оппорттунисăм çинђен лайăх калаçа кăтартаççĕ.

Мĕнрен килеççĕха çавнашкал сылтăм оппорттунисăм ĕçсем? Акă мĕнрен: практĕкри сылтăм сулăнђăкпа кĕрешес ĕç нађар пыраťха. Партти ђленĕсенђен хăшпĕрис-

сем кулакпа хирĕçесшĕн мар. Вăл ĕççем елменишђинă пирĕн патăрта тарăн тымар йанине, вăл тымарсене тĕппех кăклас ĕç хăвăрт пулса пыманнине кăтартаççĕ. Елменевшђинă вăхăтлăх, ăнсăртран пулнă ĕç маррине лайăх ăнланса илес пулаť. Елменевшђинă вăл натсионалисла, пуршуаллă, тата вырăс шовинисăмла шухăшсен никĕсĕ çинђе пулнă шухăшсен çиçтеми. Темиçе çул хушши сылтăмрисем Ђăваш респуплĕкĕнђе клас кĕрешĕвĕ çук текен теорине вĕрентсе сарнă, темиçе çул хушши, натси политтĕкне пăсса—ђенттăр укçа сахал параť тесе ларнă, ђенттăртан укçа ытларах илмелле тенĕ, çав вăхăтрах шалти пурлăхсене мопилисатсилесси çине çавăрăнса та пăхман. Пире нимĕн те памаççĕ, пиртен илеççĕ кăна тесе темиçе çул хушши Окťапĕр револђутси, партти, влаç çине елекленĕ. Ку ыйтусем çинђе Мускав çемљађђĕствин пуххинђе стутентсем нумай тĕрĕс ђарăнса тăнă. Парттин тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешес ĕçри оппăтсене пухас, вĕсем çинђе хамăрăн партти массине вĕрентсе пырас тĕлĕшпе епĕр сахал ĕçленĕха. Елменевшђинă çинђен сăмахпа калаçни сахал вăл, елменевшђинăн ăшђиккине, унăн тымарĕсене, натсионалисăмпа вырăс шовинисăмĕн ăшђиккисене тăрă шыв çине кăларса пырас пулаť. Елменевшђинă, йуманисăм, т. ыт. çинђен пирĕн уйрăм теориллĕ ыйтусене сăнаса палăртас пулаť. Ку тĕлĕшпе пирĕн ĕççем йапăх пыраççĕха. Пирĕн хăшпĕр йулташсем кун çинђен калаçма та хăраççĕ, анђах вăл ыйтусене тĕплĕн сўтсе-йавса сăнаса пырса—вĕсем çинђе партти массине вĕрентмелле. Кунта ĕçлемеллĕх пур.

Илер, сăмахран, 1917-мĕш çулхи теккапĕр уйăхне. Ку ĕç Окťапĕр револђутси хыççăнах пулнă. Ун ђухне ессерсем (кайран пирĕн парттине кĕнĕскерсем) мĕн каланăха? Акă мĕн: «Раççей темократтиллĕ фетераттивлă респуплĕк пулмалла». Çав сĭесрах çак никĕссем çинђе натсиллĕ фонт туса хунă: «Пĕтĕм ђăвашсен натсиллĕ фонђĕ Ђăвашсем хушшинђе натсиллĕ туйăма ўстерме, вĕсем хушшинђе куљттурăпа политтĕклă ĕç туса пыма, тата Раççей респуплĕкĕнђе ђăвашсене хисеплĕ, тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла тăвас тĕлĕшпе Атăл тăрăхĕнђи тĕрĕкпе фин халăхĕсемпе пĕрле ĕçлеме пикенекен пур ђăваш орканисатсисене те укçа-тенкĕпе пулăшма тăвăнаť»....

Ку фонта пур орканисатсисене те пулăшма, ђăвашсенђе натсиллĕ туйăма ÿстерме, тата ђăвашсене Раççей респуплĕкĕнђе хисеплĕ тивĕçлĕ вырăн йышăнтармалла тăвас тĕлĕшпе тунă. Кунта рапођђипе хресђен пирки пĕр сăмах та çук. Кунта Октăпĕр револђутси çинђен шарламаççĕ. Çав сиесрах «Хыпар» хаçата ђăваш орканисатсисен йађĕпе пĕтĕм ђăваш халăхĕн хаçађĕ тунă (Ђăвашсен тĕп натсиллĕ опшђĕствии, ессерсен парттин ђăваш орканисатсин комиттеђĕн, Ђăвашсен Хусан çар окрăкĕн, тĕренекен ђăвашсен комиттеђĕн тата Хусанти орканисатсисен хаçађĕ). Çав вăхăтрах акиттатсиллĕ ĕç çинђен çапла каланă: «акиттатсиллĕ ĕс натсиллĕ, тата кулђт-çут ĕç йĕрĕпе пулса пымалла». Кунта Октăпĕр револђутси çинђен пĕр сăмах та çук,—Октăпĕр револђутси пулса иртнĕ хыççăн пĕр уйăх та çурăран ун çинђен манма май çук пек, анђах пирĕн йулташсем манасшăн пулнă пулмалла.

Анђах ку ĕç 1917-мĕш çулхи теккапĕр уйăхĕнђе пулса иртнĕ. Илсе пăхар 1920-мĕш çула. Ун ђухне уйрăм парттийтсăсем партти çине, рапођђисем çине, Октăпĕр револђутси çине мĕнле пăхнă? Епĕ уйрăм фактăсене илсе çеç кăтартăп. Ђăвашсене çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсен курсĕ-сиесĕнђе пĕр парттийтсă акă мĕн калаť: «Револђутси пиртен хĕррипе иртсе пыраť, ăна епĕр, интелекенсем йертсе пымастпăр, ăна епĕр йертсе пымалли (çынсем) йертсе пыраççĕ. Хамăр ĕçе епĕр урăххисене патăмăр. Ĕç пипли кĕнекинђи пек пулса тăђĕ: асли хăйĕн çÿлте тăмалли вырăна кĕçĕннине йасмăк шÿрпилле сутрĕ».

Ку сăмахсенђен çапла шухăш тухаť: револђутсине йертсе пыракан партти пулмалла мар иккен, натсионалисла интелекентси пулмалла пулнă. Хăйсен ĕçне парттипе рапођђи класа панăшăн вĕсем хăйсене намăс тесе шутлаççĕ. Ку сăмахсене урăхла ăнланма май çук. Епĕр пĕлетпĕр,—вăл çулсенђе натсионалисла, пуршуалла кĕнекесем ђылай тухкаланă. Вăл кĕнекесене уйрăм парттийтсăсем хытă мухтанă. Вăл кĕнекесем çинђе еп халђ ђарăнса тăмастăп.

Ку 1920-мĕш çулта пулнă. Халђ тата 1925-мĕш çула илер. Партти ĕçĕн ђеретри сатађĕсем çинђен çырнă, Ђă-

вашсен Оплăçри тăххăрăмĕш партти конферентсийĕ çиреплетнĕ теçĕссенҫе çапла каланă:

1) «Вăрçă, выçлăх вăхăтĕнҫе ҫăвашсен йухăнса кайнă хапрăк-савăт промышлĕннăçĕ çак иртнĕ 7 уйăх хушшинҫе, малтанхи пекех, опорот валҫҫи кирлĕ таран укçа-тенкĕ çуккипе—аванланни курăнмарĕ. Вăрманпа кăвăç каскалакан промышлĕннăç претприйаттисем, пĕр вунна таран, кирлĕ укçа-тенкĕ çуккипе хаҫ те ĕçлемеççĕ. Гросвотствăра ĕçлекен темиçе çĕр рапоҫҫи хăйсем ĕçлекен претприйаттисем (2—3 претприйаттисĕр пуçне) ҫарăкса ларас хăрушлăх умĕнҫе тăҫĕç. Хамăр патра, оплăçра, вăл претприйаттисене ура çине тăратма условисем кăшт та çуккипе (хуçалăхăн аслă оркăнĕсем пулăшманнипе) хапрăк-савăт промышлĕннăçĕ малтанхи пекех йавăр условисенҫе йулаĭ.

2) Кунсăр пуçне, пирĕн ҫăваш хресҫен екkономĕкĕн уйрăм йенĕсем: çĕр сахалли, çĕре висĕ пусăллă майпа ĕçлени, уйрăм хресҫен хуçалăхĕсемпе колхоссен те тавarлăхĕ наҫарри, нумай пусăллă уй çине куçма, тата вылҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине вăйлатма хресҫенсен хăйсен те, кивçен паракан оркăнсен те кирлĕ таран укçа-тенкĕ çукки, çĕр сахаллипе йалхуçалăхĕнҫе пушă алăсем нумайланни, вăл алăсем ĕç тупайманни, хуçалăхра тара тытса ĕçлеттерес йĕрке питĕ сахалли, копператсине вăйлатма никĕссем наҫарри—çаплипех йулаççĕ.

Кунсăр пуçне оплăçри 10 пин ҫухăн хресҫенсем калама çук йавăр условисенҫе ҫăпта çапас ĕçпе ĕçлесе хăйсене пурăнма çăкăр тупма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та вара—оплăçра кулҫтурă тĕлĕшĕнҫен кайа йулни, кивĕ йăласем вăйлă (сăра-сăмакун хытă ĕçни, трахxом, туперккулҫос сарăлни, т. ыт. те)».

Мĕн çинҫен калаççĕ çак теçĕссем? Вĕсем ҫенттăр пире пулăшманни çинҫен, малта нимĕн те çутти, лайăххи çукки çинҫен, ҫăваш халăхĕ пĕтсе пыни, тата ытти çинҫен калаççĕ.

Ку 1925-мĕш çулта пулнă. 1928-мĕш çулта мĕн пулнăха тата? Кун çинҫен епĕр пурте пĕлетпĕр. Вăл—Ҫăваш респуплĕкĕнҫе ответлă вырăнсенҫе ĕçленĕ çынсем Елмен ушкăнĕ пĕрлешсе тухни. 1928-ш çулта вĕсем уйрăм кĕнекесенҫе, тата хăйсен тухса каланă сăмахĕсенҫе тĕп-

ри сылтăмрисемпе—Пуххарĕн, Рыккăв, Томскипе пĕр вăхăтрах хăйсен ĕçне пысăклатаççĕ, Ђăваш респуплĕкĕ «колони» пулса тăни çинђен, Ђăваш респуплĕкĕ тăвăмлă районран потрепиттĕлле район пулса пыни çинђен калаççĕ, кĕнекесенђе криçĕс хаљхи вăхăтра вăрçăђђенхинђен те вăйлă, тĕп халăх тата выљăх-ђĕрлĕх ўт-пĕв йенђен нађарланса, кайалла ђаска пырать, тесе çыраççĕ. «Коллективисатси ĕçĕ кайалла ђакса пыракан хуçалăх никĕсĕ çинђе мар, ўссе, таварлăх ытларах паракан хуçалăх никĕсĕ çинђе кăна ăнăçлăн пулса пыма пултарать. Çавăнпа та колхоссене орканисатсиллĕ, тата хуçалăхлă майсем пулсан кăна орканисатсилесси çинђен саккун кăларни выранлă пулмалла, çав вăхăтрах уйрăм хуçалăха хăпартас тĕлĕшпе ĕçлессине вăйлатма кирлĕ, уйрăм хуçалăхсем кайран—хресђенсен хуçалăхлă интересĕсем ўссе пынă май, тата патшалăх пулăшнипе—коллективланса пымалла, т. ыт. те. Акă мĕн каланă пĕрисем. Теприсем тата епĕр 20 кектар çинђе колхос тăваймастпăр, тенĕ, т. ур. те.

Çавнашкал ĕнтĕ Ђăваш респуплĕкĕнђи сылтăм оппорттуниссен прокрамĕ. Вăл прокрам—Контратйĕвшђĕнă прокрамĕпе пĕтĕмпех пĕрешкел. «Ђăваш хуçалăхĕ» шурналăн 3—4-мĕш номĕрĕнђи умстатйа çинђе ђарăнса тăмастăп, мĕншĕн тесен ун çинђен нумай калаçнă. Ђăваш çĕршывне тĕпђесе вĕренекенсен сйесĕн маттериалĕсем çинђен те каламастăп, ăна пўрте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Кунпа пĕрле т епĕр йапала çинђе ђарăнса тăрасшăн епĕ. Вăл—хуçалăх малаллăхĕ çинђен. Ђăваш респуплĕкне йертсе пынă çынсенђен пĕри акă мĕн каланă: «Йулашки çулсенђе епĕр хамăр хуçалăхăн ăшђиккине ытларах вĕренсе пытăмăр, ăна ытларах тĕпђерĕмĕр, çавăн хыççăн тин хамăр економĕке лайăхрах пĕлекен пултăмăр. Ку тĕлĕшпе пĕр пилĕк çул кайалла ĕçсем мĕнле пулса пынине илсен—тўрех каламалла: епĕр ун ђухне хамăр хуçалăха пĕлменнипе ишсе кăна çўреттĕмĕр».

Ку пĕтĕмпех 1928-мĕш çулта пулнă. 1929-мĕш çулта, тен, ĕçсем авантарах пулнă-и? 1929-мĕш çул пуçламăшĕнђе, оплăçри 13-мĕш партконферентсинђе, сылтăмрисенђен пĕрри акă мĕн калать: «епĕ сире каласа панă положенисем сире валеçсе панă кĕнекере пур. Пленăмра вĕ-

сене хирĕç пĕр сăмах та пулман. Епĕ те вĕсене пĕтĕмĕшпех çирĕплететĕп». Анҫах кĕнекинҫе сылтăм оппортунисла теорине вĕренгни сарăлат̆.

Малалла тата, Опкомăн 2-мĕш пленăмĕнҫе, 1929-мĕш çулхи март уйăхĕнҫе, Ҫăваш респуплĕкĕн пилĕк çуллăх планĕ пирки сылтăмрисенҫен пĕри акă мĕн калат̆: «...Есĕр илнĕ çветенисем тăрăх, 1927—28-мĕш çулхи таварлăх РСФСР-ҫи вăтам виçерен те иртерет. Пĕр çын пуçне—кунпа пĕрле уйрăм хуçалăх пуçне те—пĕтĕмĕшлĕ тупăш пирĕн сахал,—ку тĕлĕшпе епĕр РСФСР-ҫе паҫах уйрăм район пулса тăратпăр, пĕр çын, тата пĕр хуçалăх пуçне пĕтĕмĕшлĕ тупăш кунашкал сахалли ниçта та урăх çĕртс çук, çапах та пирĕн хуçалăхăн таварлăхĕ ҫылай пысăк. Сутнине кăтартакан проҫҫăн пысăкки хăшпĕр ҫух район пуйаннине мар, ҫухăннине кăтартат̆. РСФСР-ăн Тĕп Статтиçтĕк Тытăмĕн ҫыхвăрĕсем тăрăх—протуксине сутас тĕлĕшпе пирĕн Ҫăвашпа тутар, тата Çурçĕр Капкасăн тăвайкиллĕ пайĕ—ҫухăн район уйрăлса тăрат̆. Кунта таварлăх ӳсесси, протуксине сутас проҫҫăн ӳсесси—вырăнти халăх хăйĕн протуксине хăйне валҫи çителĕклĕ таран усă курманнипе—пырат̆.

Йулашки çулсенҫе хамăр хуçалăх ӳснине тĕрĕсленĕ ҫух тата çакăн çинҫе ҫарăнса тăмалла. Вăл—пирĕн халăх хуçалăхĕнҫе промышлĕннăçăн ҫăмăрĕ ҫакни. 1925—26-мĕш çулта вăл пирĕн 8,5 проҫҫăн пулнă пулсан, 1927—28-мĕш çулта пирĕн 6,7 проҫҫăн кăна пулнă. Çапла вара, пирĕн халăх хуçалăхĕнҫе промышлĕннăçăн ҫăмăрĕ ҫакса пынине куратпăр. Паллах, кун çине епĕр паха ĕç çине пăхнă пек пăхма пултараймастпăр. Çав промышлĕннăç ҫăмăрĕ ҫакни йалхуçалăхĕ хăвăрттăн ӳссе пынă май пулнă пулсан, тата çав вăхăтрах промышлĕннăç та ӳсет пулсан—ĕç урăхла пулĕҫҫĕ. Анҫах вăл пирĕн çук. Йулашки вăхăтра промышлĕннăçăн пĕтĕм протуксине ӳстерес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçсемех çукха. Партти орканисатсин кун çинҫе ҫарăнса тăрса—вăл протсеса ҫарма, вăл йухăма урăх йенелле йама пĕтĕм вăйа хурса тăрăшас пулат̆».

Мĕн курăнат̆ха кунта? Акă мĕн. Елменĕвшҫинăна сарас ĕç хĕрсех пырат̆, анҫах пит вăрттăн, асăрханса пулса пырат̆. Кăна хирĕç пленăмра тивĕçлĕ ответ пань-иха?

Пана. Ака мĕн калана кăна хирĕç пленамри йулташсенђен пĕри:

«Промышлĕннăç тĕлĕшпе, хăшпĕр ђыхвăрсенђе кăтартса пана тăрăх, Вăтам Аçи 357 прођђăн, Касакстан 450 прођђăн, пирĕн респуплĕк 500 прођђăн ытла ӳсет. Çапла вара, ытти респуплĕксемпе танаштарсан, епĕр самайах тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăратпăр. Анђах ку çителĕклĕ марха, промышлĕннăç тĕлĕшпе хăвăртлăха кăтартакан прођђăнсем пысăк пулин те—Вăтам Аçири, Касакстанри, тата Ђăваш респуплĕкĕнђи промышлĕннăç ђăмăрне илсен—Ђăваш респуплĕкĕнђи промышлĕннăç ђăмăрĕ питĕ пĕђĕккине куратпăр. Кăна хирĕç никам та нимĕн те калама пултараймаст.

Кун хыççăн выватсем мĕнле пулма пултараççĕ!?

1. Пĕтĕмĕшпе илсен, парттин кăтартăвĕсене план тĕрĕс палăртса парат, анђах ăна татах тĕрĕслесе тухмалла, мĕншĕн тесен, пирĕн ку тĕлĕшпе оппăтсем сахаллипе, унта çитменлĕхсем те пулма пултараççĕ. Çавăнпа та плана тата лайăхрах тĕрĕслесе тăвасси çине çирĕппĕн çавăрăнса пăхмалла.

2. Плана пурнăçа кĕртме пĕтĕм массăна мопилисатсилени кирлĕ, кун çинђен XV-мĕш партконферентси те каласа хăварнă. Массăна мопилисатсилес тĕлĕшпе плана пухусенђе, партти йађейккисенђе, профсойуссенђе, йалсовеђĕсенђе, т. ыт. тĕплĕн сӳтсе-йавмалла.

3. Пилĕк çуллăх план—сылтăм сулăнђăкçăсем, вĕсемпе килĕшекенсем, тротскиссем партти çинђен елекленине хирĕç тата тепĕр хутђен тӳрĕ, çирĕп ответ парат, хресђенсен тĕп массине, вĕсен хуçалăхĕсене хăпартас ĕçре пысăк пулăшу парса пынине кăтартат, парттине вăрçăллă-феоталлă експлоаттатси пирки айăпланине аркатса пăрахат.

4. Пилĕк çуллăх план пирĕн Ђăваш респуплĕкĕ колони мар, Совет сойусĕн уйăрлми пайĕ пулса тăнине кăтартат. Кăна пирĕн респуплĕкри строиттĕлствă вађђи укçа-тенкĕ хыввни те аван кăтартса парат. Пирĕн ĕç—плана тĕрĕс ăнланса илесси, ун çинђен тĕрĕссĕн ăнлантарасси, ăна вăхăтра пурнăçа кĕртесси. Пирĕн ĕç—Совет сойусĕнђи пур ĕçхалăхĕпе пĕрле епĕр партти кăтартса пана çулйĕре тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пыма пултарнине кă-

тартасси. Пирĕн ĕç пире паракан укçа-тенкĕне тĕрĕссĕн усă курса пырса—çитес пилĕк çуллăх патне лайăххăн хатĕрленсе—сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе тата вирлĕрех хĕн ĕçлесси».

Çапла вара, елменĕвшђинă теорине 1929-мĕш çулта та Опком пленăмĕсенђе те, пиђетре те уççăнах сарма хăтланнине куратпăр.

Пирĕн орканисатси сылтăм сулăнђăка хирĕç иртнĕ вăхăтра та, халĕ те вирлĕ ответ парса пырать. Анђах уйрăм ĕçлекенсем хушшинђе пысăккăнах иккĕленнисем пулнă, кăна пысăк йăвăрлăхсемпе çĕнтермелле пулнă. Уйрăм йулташсем сылтăм сулăнђăкçăсен сылтăмалла ĕçĕсене йышăнасшăн пулман. Паллах, вăл йулташсем хытă йăнăшнă. Пирĕн практĕкре сылтăмалла ĕçсем ђылай пулнă. Çĕрсене йĕркеленĕ ђух епĕр ку таранђђен пытарса, ђухăнсем мар усă курса пурăннă çĕрсене пиншер кектар палăртатпăр. Паллах, куи çинђен Опком вăхăтрах систернĕ. Анђах, çав ĕçпе ĕçлекен йулташсем мĕн тупăха? Нимĕн те туман.

Пирĕн практĕкре сылтăм оппорттунисла ĕçсем ђылай пулни çинђен епĕ каларăм ĕнтĕ. Çавăнпа та епĕр çак Пленăмра ĕçри сылтăм оппорттунисăмпа кĕрешессине вăйлатма кирли çинђен, çав вăхăтрах «сулахай» пăрăнђăксемпе те кĕрешсе пыма кирли çинђен уйрăмăн палăртса хăварас терĕмĕр. Хамăрăн партти орканисатсине парттин тĕп çулйĕрĕшĕн теорире те, практĕкре те кĕрешме мопилисатсилес тесе епĕ йурийех ĕçри сылтăм сулăнђăка кăтартакан фактсене илсе кăтартрăм. Парттин тĕп çулйĕрĕшĕн Ленинла çапăçма пирĕн парторканисатсине вĕрентсе пырас, теориллĕ пĕлўне тата çўлерех çĕклес ĕçе вăйлатса йамалла.

Çирĕп сатанисене, клас çулйĕрне пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре пирĕн татăклă улшăну тумаллах. Татăклăн, уйрăмăн йертсе пыма пĕлмелле, телекраф тăрăх кăна йертсе пырассине пĕтермелле, комантировккăсене йĕркелемелле.

Йалти орканисатсисен ĕçне урăхлатса çĕнетесси çине, партти катăрне хатĕрлес ĕç çине вирлĕн çавăрăнса пăхмалла. Ĕçе орканисатсилеме, вăйсене кирлĕ пек тĕрĕс валеçме, ыратакан вырăнсене вăхăтра шыраса тупма

пĕлмелле, массăсен пуçарулăхне пĕлсе орканисатсилемелле, самокриттĕке сарса ђир-ђĕрсемпе прорывсене вăхăтра палăртса пымалла.

Какановиђ йулташ акă мĕн калаҫ: «Комуниссен-маркçиссен çапăçу хирне йĕри-тавра пăхса çавăрăнма пĕлес пулаҫ, фронтăн вăйлă, тата вăйсăр пайĕсене палăртма пĕлес пулаҫ. Пирĕн хамăрăн вăйа пĕлсе тăрса, ĕç çĕнтерессине ĕненме пăрахмалла мар, анђах лăпланма йурамасҫ, çывăрмалла мар, фатталисăма йермелле мар—пирĕн çĕршывра сотсиалисăм туса çитерме май пур ĕнтĕ, тесе тăма, самоҫҫокпа ђирлеме йурамасҫ, ун вырăнне мĕнпур вăйсене мопилисатсилемелле, ума лартнă сатађсене анăçлăн пурнăçа кĕртме, çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне малалла пыма пур орканисатсисене, пур рыђаксене хатĕр тăратмалла. Ку йаланах пирĕн парттин вăйлă йенĕ пулса тăнă, пирĕн йăнăшсемпе тăшмансем усă курасси, хамăр çитменлĕхсемпе йăвăрлăхсене уççăнах палăртасси пире нихăçан та хăратман».

Пирĕн хамăр ĕçе урăхлатса çĕнетмелле, партти, советпа хуçалăх, профсойус, комсомол, колхоспа копператси орканисатсисен вăйĕсене пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнђе хамăр ума лартнă сатађсене пурнăçа кĕртме, Тĕпкомпа Тĕп Контролђ Комиççин теккапĕрте пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленăмĕн, тата Крайкомăн йанварте пулса иртнĕ пленăмĕн кăтартăвĕсенђе пурнăçа кĕртме вирлĕн мопилисатсилесе—1931-мĕш çулта сотсиалисăмлă екканомĕкĕн никĕсне туса çитермелле.

## Йулашки сăмах.

Йулташсем, партти Тĕпкомĕн, Тĕп Контроҍ Комиççин, тата Крайком Пленăмĕн решшенийĕсене сўтсе-йавас ĕçе, епĕр партти принтсĕпĕсене пăхăнса туса иртертĕмĕр. Пленăм решшенийĕсене сўтсе-йавас ĕçе епĕр Ҍăваш респуплĕкĕн условийĕсенҍе пайанхи кунăн татăклă сатаҍĕсемпе çыхăнтартăмăр. Ҍăваш респуплĕкенҍи Халăх хуçалăхĕн 1931-мĕш çулхи контроҍҍĕ ҍыхвăрсене, Снапшени Кăмиссариаҍĕпе Потрепкопператси ĕçĕсем çинҍен ыйтусем лартса сўтсе йавнипе, тата совет суйлавĕсем мĕнле иртнине, вĕсем хăйсен ĕç майĕсене улăштарса пынине малтанлăха пăхса тухса, епĕр партти решшенийĕсене пайанхи кунăн сатаҍĕсемпе çыхăнтартăмăр.

Иккĕмĕш, ку ыйтусене сўтсе йавасси пĕрлĕхлĕ шухăшпа, тата «хăвăртлă ĕç ўсĕмĕшĕн» тейекен лосăнкпа килĕшсе иртрĕ. Тĕпком, тата Крайком кăтартса хăварнă ĕç хăвăртлăхĕсене, тата епĕр палăртса хăваракан ĕç хăвăртлăхĕсене хирĕç сас-ҍĕв те илтĕнмерĕ. Тухса калакансенҍен пурте палăртса хăварнă ĕç хăвăртлăхĕсен хисепне пурнăça кўртме май пурри çинҍен, тата хамăр умма кăларса тăратнă сатаҍсене ытлашшипех пурнăça кĕртес тĕлĕшпе, шалти пурлăхсене тата ытларах мопилисатсилеме кирли çинҍен тухса каларĕç.

Виççĕмĕш, ыйтусене сўтсе-йавас ĕç парттин тĕп çулйĕрĕшĕн татăклăн кĕрешме кирлине кăтартакан ҍăн-ҍăн лосăнкпа килĕшсе иртрĕ. Парттин тĕп çулйĕршĕн, ҍи пысăк хăрушăлăх пулса тăракан сылтăм сулăнҍăкпа, «сулахайла» siксе ўкессипе тата шухăшсемпе, икĕ питлисемпе, вырăс шовинисăмпе тата вырăнти натсионалисăмпа кĕрешни урлă кăна, епĕр хамăр умра тăракан сатаҍсене пурнăça кўртме пултаратпăр.

Пирĕн сатаҫ вăл сотсиалисăмлă екකономĕк никĕсне хывас тĕлĕшпе массăна конкретлă ĕçсем тавра орканисатсилесе практĕкле ĕçпе хутшăнтарасси. 1931-мĕш çулхи сатаҫсене пурнăça кӳртме, ĕç хăвăртлăхне ӳстерессишĕн татăклăнах кĕрешме тытăнмалла. Пилĕк çуллăх планра кăтартса хăварнă çĕнĕрен претприйаттисем тăвассине, вăрман пуйанлăхне хапрăк-савăт виттĕр кăларассине пĕтĕмĕшпе пирĕн пурнăça кӳртес пулаť. Ку ĕçри ситĕнӳсене, тата хамăр респуплĕкри палăртса хунă пурлăхсене шута илсе, пирĕн енеркипе химиллĕ промышлĕннăça сарас тĕлĕшпе практĕкла сатаҫсем кăларса тăратса, хамăр хуçалăха çĕнĕ çул çине кăларса вăйлатса пымалла тăвас пулаť. Колхоссем урлă вырăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине сарса пымалла, йалхуçалăх протуксине ĕçлесе тумалли претприйаттисене йышлатнипе, йалхуçалăх ҫĕр таварĕсене усă курма промышлĕннăçлă претприйаттисем тунипе енеркипе-химиллĕ промышлĕннăça вăйлатассишĕн тапăçмалла, вăл ĕç пирки шыравсене вăйлатмалла. Енеркипе-химиллĕ промышлĕннăç пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕнҫи промышлĕннăçра йертсе пыракан вырăн йышăнмалла пултăр. Енеркипе-химиллĕ промышлĕннăça çак формăсемпе вăйлатса пыма кирлине пирĕн хамăр умма тăратмалла. Кунта кăтартса хăварнă малашнехи сатаҫсене пурнăça кĕртме май пурри куç умĕнҫех, çавăнпа та пирĕн вĕсене пурнăça кĕртмелле. Çакнашкал сатаҫсем тăраççĕ ĕнтĕ 1931-мĕш çулта.

Ку сатаҫсене пурнăça кӳртме май пурри пĕтĕмĕшпех епĕр иртнĕ çулта Ҫăваш респуплĕкĕнҫи халăх хуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туниҫен килет. Ку тĕлĕшпе пуршуаллă-натсионалисла, тата шовинисăмла елементсемпе вĕсен пирĕн партти орканисатсинҫи акĕнҫĕсем—сылтăм оппортуниссем мĕн калаҫҫĕç, тата халĕ мĕн калаççĕха? Вĕсем Ҫăваш респуплĕкĕ «пĕтсе» пыни синҫен, ҫăваш хуçалăхĕ вăйсăрланса пыни çинҫен калаçрĕç. Ҫăваш çĕршывĕ колони пулса тăраť, унăн хуçалăх ӳсĕмĕпе малашнехи çулйĕрне, тата ăна малалла тĕртсе пыракан вăйсене наукка тăрăх вĕренмен, епĕр пĕр шăтăка пырса тăрăнтăмăр та, унтан çавăрăнса тухма пултараймастпăр т. ыт. çинҫен те нумай каларĕç вĕсем.

Пирĕн ситĕнӳсем, тата пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш

çулхи прокрам сылтăм-оппортунисен суйă сăмаххисене пĕтĕмĕшпех татăклăн çапса аркатаççĕ.

Пирĕн умра тăракан сатађсем калама çук пысăк. Вĕсем парттин тĕп çулйĕрĕнђен пăрăнакан сулăнђăксемпе вирлĕн кĕрешме, пирĕнтен хамăр ĕç меттăђĕсене татăклăн улшăнтарса çĕнĕлле ĕçлеме вĕренме ыйтаççĕ. Хамăр партти орканисатсинђи сылтăм оппортунисăмпа, унпа пĕрлех, вырăс шовинисăмпе, тата вырăнти натсионалисăмпа татăклăн кĕрешме кирли çинђе пленăм тĕрĕс ђарăнса тăнă. Партти тĕп çулйĕрĕнђен пăрăнакан сулăнђăксемпе, пуринђен ытларах сылтăм сулăнђăкпа татăклăн кĕрешнисĕр пуçне, епĕр хамăр умра тăракан сатађсене пурнăçа кĕртме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен, йалхуçалăхне талкишпех ушкăнлатса пынă май пĕтсе пыракан кулаксен класĕ, урнă пекех хирĕç тарăт. Кулаксен класĕ хăйĕн тымарне тĕрлĕ канавсем тăрăх тарăна йарса хунă. Вак пуршуаллă елементсем тата кулаксем хирĕç тăни рапођђи класпа пирĕн парттин уйрăм сыпăкĕсем хушшинђе пăркаланђăк шухăшсене вăйлатаççĕ. Кун çинђен практĕкла ĕçри сылтăм ĕçсем аванах каласа пыраççĕ. Пирĕн Ђăваш респуплĕкĕн условийĕсенђе пуршуаллă-натсионалисла, тата сылтăм оппортунисла шухăшсем темиçе çул хушши сарђĕç. Кунта тухса каланисем пурте ăна фактăсемпе çирĕплетсе хăварђĕç.

Сăмахран, Иванов йулташ тухса каланинех илер, вăл хăйĕн йăнăшĕсене пĕр тунмасăрах йышăннă, вăл партти тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешет. Вăл калăт: иртнĕ вăхăтра крисĕс çинђен, хуçалăх вăйсăрланса пыни çинђен, хуçалăха хăпартма ђенттăртап çеç укçа-тенкĕ илме кирли çинђен кăна калаçађђĕç. Хамăр респуплĕк ăшĕнђи пурлăха мопилисатсилеме кирли çинђен аса та илмен». Епĕ ку ыйтусем çинђе урăх ђарăнса тăмастăп. Çакна кăна асăрхаттарса хăварма шухăшлатăп епĕ. «Епĕр пĕтсех пыратпăр, епĕр пĕр çĕре пырса тăрăнтăмăр та, унтан кайалла çавăрăнса тухаймасăрах пĕтетпĕр, тата натси политтĕкĕн принтсĕпсенђен пăрăнатпăр»—тенĕ ђухнени кунсенђен мĕн ђухлĕ айаккарах кайнă, епĕр çавăн ђухлĕ, пирĕн партти орканисатсийĕ хăйĕн ăшĕнђи пуршуаллă-натсионалисăмла, шовинисăмла, тата оппортунисăмла шухăшсем тĕрĕс мар иккенне палăртас тĕлĕшпе пысăк ĕç-

сем тупине шанҫӑкларан та шанҫӑкларах курса пыратпӑр. Анҫах хӑшпӗр йулташсене иккеленҫӗк шухӑшӗсем пысӑккӑн пӑтрантарнӑ вӑхӑтсем пулкаланӑ. Вӑл йулташсене тӗрӗс ҫул ҫине кӑларса тӑратас тӗлӗшпе пысӑк йӑвӑрлӑхсемпе тӗл пулкаланӑ епӗр.

Пирӗн партти орканисатсийӗ, Партти Тӗпкомӗпе Крайком тӗрӗс йертсе пынипе самокриттӗке вӑйлатса, татӑклӑ сатаҫсем тавра партти массине мопилисатсилесе, парттин тӗл ҫулӗйӗрӗнҫен пӑрӑнакан сулӑнҫӑксемпе икӗ фронтпа та, тата партти ӑшӗнҫи ҫир-ҫӗрсемпе кӗрешсе пырса хӑйӗн ӗретне ҫирӗплетрӗ. Хаҫхи вӑхӑтра пирӗн партти орканисатсийӗ ҫирӗппӗн ҫӑмӑртаннӑ, итеолоки тӗлӗшӗнҫен ҫирӗп орканисатси пулса тӑҫӗ. Ку фактӑсем пӗтӗмӗшпех, епӗр хамӑр умра тӑракан сатаҫсене пурнӑҫа кӳртме пултарнине кӑтартаҫҫӗ. Ҫапах та, хамӑр умра тӑракан сатаҫсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе, хамӑр ӗҫ меслеҫӗсене татӑклах улӑштармалла.

Совет аппарҫӗн ӗҫне ҫӗнӗ майсемпе ӗҫлемелле туса лайӑхлатас пирки, Совет аппартне ҫӑвашлатассипе хамӑр хушӑран ҫӗнӗрен ӗҫлекенсем парас пирки партти панӑ кӑтартусене татӑклӑн пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе пирӗн тӑрӑшса ӗҫлемелле пулаҭ. Калас пулаҭ, вырӑс шовинисӑмӗпе кӗрешесси ҫас-ҫасах сӑмахпа кӑна пулса пыраҭ. Совет аппаратне, претприйаттисене т. ыт ҫӑвашлатассинех илсе пӑхар. Кунта пирӗн ӗҫсем наҫар: хӑшпӗр тӗпри уҫрештенисенҫе ку тӗлӗшпе вырӑнтан та тапратайманха епӗр. Ҫӗнӗ претприйаттисенҫе ҫӑвашсем йышлӑ мар.

Улатӑрти пӑравуссене йусакан савӑтах илӗрха, вӑл Ҫӑваш респуплӗкне 1925-мӗш ҫулта кӗнӗ. Унтанпа пилӗк ҫул ытларах иртрӗ пулин те, пӑравуссене йусакан савӑта ҫӑвашлатас ӗҫ ҫӑтма ҫук йапӑх пыраҭ. Ку ӗҫе пурнӑҫа кӗртес тӗлшпе епӗр ҫине тӑнине палӑртманни курӑнаҭ, ҫав вӑхӑтрах, епӗр ку ӗҫре ҫас-ҫасах пӳрократла, тата вырӑс шовинисӑмӗ тӗлне хирӗҫ пулнине те каласа хӑварас пулаҭ. Ҫукун ҫул транспӑрҫӗпе профсойус орканисатсинҫе ӗҫлекенсем ку тӗлӗшпе татӑклӑн нимех те туман. Улатӑрти пӑравуссене йусакан савӑта ҫӑвашлатас пирки епӗр темиҫе хутҫен те решшенисем йышӑннӑ, анҫах вӑл решшенисем халҫҫен те хут ҫине ҫырнипе кӑна тӑрса йулаҫҫӗ. Ҫитес кунсенҫе пирӗн Улатӑрти

пăравуссене йусакан савăта ђăвашлатас пирки мĕн-мĕн тума кирлине татăклăн палăртса, ĕçе тыгăнмалла.

Ку ĕçре пире ђукунçул транспăртĕнђи профсойуссемпе савăт пуçлăхĕсен çителĕклĕ пулăшу памалла. Вырăс комунисĕсен вак-халăхсем хушшинђе ĕçлекенсене пулăшма кирли çинђен Ленин йулт., парттин 10-мĕшпе 12-мĕш сйесĕсем, 12-мĕш сйсс хыççăн вак-халăхсен 4-мĕш совешђанийĕ те çирĕппĕн, пит те тĕрĕс каласа хăварђĕç. Анђах, хăшпĕр ђухне ку кăтартусем кирлĕ пекех пурнăça кĕрсе пыраймаççĕ-ха.

Малалла тата Куславккари савăта, Вăрнарти фосфорит савăтне, тата Çĕмĕрлери кăмпинат строиттĕлствине илсе пăхар. Ку претприйаттисем пурте—совет ађисем. Вĕсене ђăвашлатас ĕç лайăхрах пулма кирлĕ пек туйăнаť, анђах çапах та йапăх. Ку претприйаттисенђе ђăвашсен прођђăнĕ çителĕклĕ мар. Епĕр кунта та претприйаттисене ђăвашлатасси çине пўрократла, шовинисăмла, тата оппорттунисла пăхакансене çĕнтерсе пĕтерейменха. Уђрештенисемпе претприйаттисене ђăвашлатас пирки, епĕр пĕр решшени кăна йышăнман, анђах вăл решшенисене пурнăça мĕнле кĕртсе пынине сăнас тĕлĕшпе йапăхрах ĕçленĕ. Ĕçлекенсенђен нумайĕшĕ хапрăк-савăтсене туса лартсан натсиллĕ пролеттари хăйне хăйех пулса тăраť, тесе шухăшланă, шухăшлаççĕ те. Вăл оппортунисăм. Пирĕн унпа татăклăн кĕрешсе, çĕнтермелле. Совет аппараđĕпе претприйаттисене ђăвашлатас ĕçе хирĕç тăракан пўрократла, шовинисăмла, тата оппортунисла елементсене çапса аркатмалла. Натсиллĕ пролеттари тăвас ĕç çав тери пысăк йăвăрлăхсемпе çыхăнса тăраť. Кунта рапођђисене ĕçе илнĕ ђухне клас тĕлĕшĕнђен суйласа илме кирли çине, хваттер, пурнăç, куљттурлă условисем тата ытти условисем çине те темиçе хутђен, тăтăшах çавăрăна-çавăрăна пăхма кирлĕ пулаť.

Кунта сăмахпа кăна ырă сунни çителĕклĕ мар, кунта укçа-тенкĕ, тата вăл ĕç çине кашни куллен çавăрăнса пăхни кирлĕ. Халиђђен ку тĕлĕшпе сахал ĕçленĕха епĕр. Реконструкси тапхăрĕнђе натсиллĕ катăрсем хатĕрлес ыйту çĕнĕлле тухса тăраť.

Халђ ĕнтĕ, хўçалăхпа-политтĕк кампани, тата пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи промфинплана тултарас

ыйтусем çине куçатăп. **Парттин тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешни—Пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи халăх хуçалăхĕн планне тултарассишĕн кĕрешни пулаť.** Парттин тĕп çулйĕрĕшĕн çапăçасси—пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи татăклă прокрамне пурнăçа кĕртни пулаť. Ку тĕлĕшпе ĕç хăвăртлăхне татăклăнах ўстермелле. Пирĕн Ђăваш респуплĕкĕн промфинпланне тултармалла. Планра кăтартнă тăрăх халăх укçа-тенкине мопилисатсилес ĕçе, тырпул хатĕрлессине, вăрман хатĕрлессине, аш-какай, технĕклă кулђттурсене хатĕрлес ĕçсемпе експăрт планне тултарса, пирĕн çуракине те полђшевикла хăвăртлăхсемпе иртермелле. Ку сатађсене пурнăçа кĕртес ĕçре пирĕн прорывсем, тата практĕкла ĕçри сылтăмла ĕçсем те пур. Пленăмра тухса калаканнисем пурте ку ыйтусем çинђе ђарăнса тăрса, токлатăн тĕп шухăшĕ тĕрĕс иккенне татăклă фактăсемпе çирĕплетсе хăварђĕç.

Халăх укçи-тенкине мопилисатсилес ĕçех илсе пăхарха. Пирĕн финанс планне 30 мĕлйарт тенкĕлĕх ытла тултармалла. Халђхи вăхăтри хăвăртлăхсемпе кăна ĕçлесен, епĕр нумайах малалла кайас çук. Ђăваш респуплĕкĕнђе, пирĕн 1-ш квартăлта 6,5 мĕлйун тенкĕ пухмалла. Ĕç хăвăртлăхсем уйрăм квартăлрипе танаштарсан калама çук йерипен шăвассĕ, йанварĕн 2-мĕш çурринђе вĕсем пушшех вăйсăрланса çитрĕç. «Пилĕк çуллăх плана тăватă çулта» сайома сарас ĕç нађар пулса пыраť. Кулак хуçалăхĕсем çине уйрăм сатанисем тăрăх хунă налоксене халиђђен те шыраса илеймен; таварсене, тата йалхуçалăх машшинĕсене сарас ĕç ђăтма çук йапăх пыраť; перекст кассинђе вклатђĕксем хутшăнса пырас вырăнне ђакса пыраççĕ, кулђттурлă ĕçе вăйлатма кирлĕ укçа-тенке пухма та тытăнман. Ку прорывсем халăх пурлăхне мопилисатсилес ĕçре харпăр хăй тĕллĕн пулса пыракан оппортунисăм пуррине тата ку ĕçе тăвассинђен тăварăннине кăтартаççĕ. Ку прорыва пирĕн хăвăртрах пĕтермелле. Утарлă квартăлта епĕр ђăн-ђăнах утарлă ĕçлерĕмĕр. Хамăр плана тултарассине 70 прођђăн ытларах кăна тултартăмăр пулин те, ђенттăр кăтартса панă контролђлĕ ђыхвăрсене 200 прођђăнĕпех тултарнă епĕр. Çавăнпа та ĕнтĕ, Ђăваш респуплĕкĕнђи Финанс Кăмиссариађĕ хĕрлĕ хăма çине лекме тивĕçлĕ пулђĕ те. Йан-

вар уйăхĕнҫе ку тĕлĕшпе пысăк прорыв. Ку ĕнгĕ, епĕр утарлă квартăлта пулнă ҫитĕнўсене ҫирĕплетсе хăварайманнине кăтартаҭ. Утарлă кварттăлра ĕҫлекенсем малаллăха курмасăр ĕҫленĕ, вĕсем: утарлă кварттăлра ĕҫлесе укҫа-тенкĕ пухатпăр та, ĕҫ укҫи парса тататпăр та канатпăр—тесе шухăшланă. Вĕсем утарлă кварттăлри ĕҫ хăвăртлăхĕ ўсĕмĕ ытти кварттăлсенҫе ĕҫлемелли виҫе пулса тăма кирли ҫинҫен калакан Опком кăтартăвĕсене маннă. Ҫак хăйне хăй пулса пыракан оппорттунисăмла йухăма пĕтермелле. Ку ĕҫ тавра опҫăна мопилисатсилесе, кулак хуҫалăхĕсенҫен кирлĕ пек налоксемпе спорсене вăхăтра шыраса илсе, халăх укҫа-тенкине мопилисатсилес ĕҫĕн планне тултармалла.

Уйрăм квартăлта ĕҫлесе пăхса оппăт тунă хыҫҫăн, епĕр пилĕк ҫуллăх планăн 3-мĕш ҫулĕнҫи прокрамине кварттăлсем тăрăх пайларăмăр. Кăна халăх хуҫалăхĕн планне тултарас ĕҫре кашни кварттăлра (кĕске вăхăтра) мĕнле ĕҫлесе пынине вăхăтра тĕрĕслесе пыма авантарах пултăр тесе турăмăр епĕр. Унсăрăн ҫас-ҫасах хуҫалăх ҫулĕ пуҫланнă вăхăтра план ҫинҫен шухăшламан, нумайăшĕ: хуҫалăх ҫулĕ пĕтинҫен вăхăт ҫылайха, ĕҫлемеллĕх пур, ĕлкĕретпĕр, плана тултарăпăрха—текелеҫҫĕҫ. Плана кварттăлсем тăрăх пайласан апла калама ҫук. Акă сана план, тултар ăна, ытлашшипех тултарсан тата авантарах.

Промфинплана тултарасси мĕнле пыраҭ-ха пирĕн? Епĕр промфинплана йаланах тултарса пыраймастпăр. Сăлтавсем ăҫта? Сăлтавсем пĕтĕмĕшпех ĕҫе орканисатсилеме, массăсен хастарлăхне ĕҫре йертсе пынă ҫĕре хутшăнтарма пĕлменнинҫе, татăклă рукковотствă ҫукинҫе, савăтри йĕркесем тирпейлĕ мар, йетинонаҫҫали ҫук, утарлă прикатăсен, станоксен тата тсехри ĕҫ оппăҫĕсене шута илсе пырас ĕҫсем йĕркеллĕ мар, т. ыт. те.

Ун ҫинҫен пĕрре кăна калаҫман, нумай калаҫнă пулин те, ку ҫитменлĕхсем халиҫҫен те пĕтсе пымаҫҫĕха.

Акă Фосфорит савăтне, Ҫĕмĕрле кăмпинатне, тата Улатăрти пăравуссене йусакан савăтсенех илсе пăхар. Епĕр ку претприйаттисемпе тата ытти претприйаттисен ĕҫĕсене нумай пулмасҭ тишкĕрсе тухрăмăр. Пур ҫĕрте те пĕрешкел ҫитменлĕхсем: йетинонаҫҫали ҫук, массăллă ĕҫ йапăх, тсехсенҫе йапăх ĕҫлеҫҫĕ, тума кирлĕ ĕҫсене мĕнле

туса пынине тĕрĕслесе пырас йала çук. Ку çитменлĕхсем çинђен Никиттĕн йулт. хăйĕн токлатĕнђе тĕплĕн каласа пађĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерсе пымасан, епĕр малашне те прорывсене пĕтерме пултарайас çук. Çавăнпа та йетинонађђалине тымарлантарассипе, мĕн пур пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес ĕçе пĕтĕм опђăна мопилисатсилесе хутшăнтармалла. Çĕмĕрле кăмпинатĕнђе миçе парттийтсă, тата миçе комсомолĕс пуррине шута илменни ирсĕрлĕх мариха? Кунта мĕн пурĕ 12 парттийтсă, çак парттийтсăсем утарлă прикатăсенђе мĕн-мĕн ĕçленине йађейккă пĕлмест.

Ĕçсене мĕнле туса пынине тĕрĕслессине орканисатсилемелле. Ĕçе тĕрĕслесси, пĕр-пĕр проттокола йе постановленине алла илсе, ак ку пункта пурнăçа кӳртнĕ, кăна кӳртмен тени кăна мар. Ĕçе тунине тĕрĕслесси вăл, станок, тсех, савăт ĕçĕсене, протукси пахалăхне кăтартакан паллăсене, рапођђисен сĕнӳвĕсене пурнăçа кĕртсе пынине, парттипе правиттĕлствă ратсионалисатси пирки, халăх пурлăхне мопилисатсилес пирки, çунтармалли йапалана перекетлĕ тыткалассипе колхоссене љкоттăсем парас пирки панă кăтартусене пурнăçланине т. ыт. тĕрĕслени пулаť. Ĕçлекенсем çитмеççĕ, пухкалтĕрсем çук т. ыт. тĕрлĕ калаçакансем те пур. Кун çинђен Çĕмĕрлерен килнĕ претставиттĕлсем хăйсен токлатĕнђе каларĕç. Çĕмĕрле кăмпинатĕнђи пухкалтери ĕçĕ виçĕ уйăх кайра пыраť, çавăнпа та кунта пахалăха кăтартакан паллăсем çинђен, тата утарлă прикатăсен ĕç хисепĕсене шута илсе пырасси çинђен калаçмалли те çук. Кунта прорывсем çинђен вăхăтра пĕлтерсе, вĕсене пĕтерсе пыма кирли çинђен кăшкăрма май та килмест. Çĕмĕрлерен килнисем:—есĕр пире пухкалтĕрсем, сђеттовотсем парăр, вара епĕр пухкалтери ĕçне хăй калăпне лартма пултаратпăр—теççĕ. Ăçтаха сирĕн аппарат, ăçта актив, массăсен пуçаруллă ĕçĕпе рапођђи контрољ ăçта сирĕн? Сирĕн пухкалтĕрсем те, сђетовотсем те пур, вĕсене орканисатсилеме, тата ĕçлеттерме пĕлес пулаť. Массăсен хастарлăхне орканисатсилесе ĕçе йертсе пырас çĕре хутшăнтарма пĕлес пулаť, сирĕн вăл тĕлĕшпе нимĕн те çук. Катăрсемпе орканисаттăрсене суйласа илме пĕлес пулаť. Ку çăмăл ĕç мар, çавăнпа та вăл ĕç çине

тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхни кирлӗ. Рукковотствӑ ӗҫне «вопђе» туса пырасси ҫинђен татӑклӑ рукковотствӑ ҫине куҫмалла. Утарнӑй прикатӑсен ӗҫне кулленех шута илсе пырас ӗҫе йӗркелемелле. **Иванов,** йе **Ҫитӑрӑв** прикатисем орканисатсиленнӗ пулсан, вӗсем мӗнле ӗҫленине, хӑйсен ӗҫӗнђе мӗнле меслетсемпе усӑ курнине, вӗсем ҫитменлӗхсемпе мӗнле кӗрешнине, массӑна мӗнле майсемпе мопилисатсиленине т. ыт. те пӗлес пулать. Ҫакӑнта кӑтартнисене пӗлсе тӑмасан, кашни утарлӑ прикатӑн ӗҫне шута илсе пымасан, утарниђӗствӑ пустуй ӗҫ кӑна пулса тӑрать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ, пирӗн сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртупа утарниђӗствӑ ӗҫӗсен хисепӗпе пахалӑхне шута илсе пыма кирли ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

Хаљ ӗнтӗ ратсионалисатси ыйтуне илер. Ку ыйту, пирӗн респуплӗк условийӗнђе пушшех, хӑй ҫине кашни куллен ҫавӑрӑнса пӑхма хушать, мӗншӗн тесен, пирӗн Ђӑваш ҫӗршывӗнђе кикантсем ҫукха, ҫӗнӗ машшинсем сахал. Пирӗн кашни сӗнӳве тӗплӗн тишкӗрсе тухнипе пӗрлех, вӑл сӗнӳве кам панине, вӑл сӗнӳвӗн пахалӑхне те лайӑх пӗлсе тӑмалла. Пирӗн ратсионалисаттӑрсемпе исопретаттӗлсене, машшинсемпе станоксене ҫӗнӗ майсемпе ӗҫлеттермелле тума пулӑшакансене пур йенђен те пулӑшса пырса, парнесем парса т. ыт. тӗрлӗ майсемпе хакламалла.

Кунашкал сӗнӳсене пирӗн рапођђисен масси хушшинђе сарма тӑрӑшмалла. Ҫак ӗнтӗ пӗтӗмӗшпех татӑклӑ рукковотствӑ пулма кирлине пӗлтерет. Татӑклӑ рукковотствӑ тӑвас пулсан, ӗҫе, происвотствӑна, технӗккӑна т. ыт. пӗлни кирлӗ.

Какановиђ йулт. калать: «Совет орканисатсинђе, хуҫалӑх, коопЕраттив, снапшени, партти орканисатсинђе, кирек мӗнле вырӑнта ӗҫлекен комунис пултӑр хӑть—вӑл йертсе пырас ӗҫе тӗплӗн ӑнланмасӑр, тарӑнӑн шухӑшлашухӑшла илмесӗр ҫийелтен кӑна туса пырать пулсан, татӑклӑ кӑтартусем памасть пулсан, вӑл сылтӑм сулӑнђӑка хирӗҫ тӑни ҫинђен темӗнле ӳкӗтлесе каласан та, унашкал комунис пољшевик та Ленинтсӑ та мар. Унашкал комуниса епӗр:—есӗ пӳрократ, есӗ сылтӑм сулӑнђӑкҫӑсемпе пӗрле ӗҫлетӗн, есӗ тӑшмансене пулӑшасшӑн

ĕçлетĕн, теме пултаратпăр». Кураттăри, йепле çирĕппĕн татса каланă. Хаљхи вăхăтра кирек ăçта ĕçлекен комунисран та квалификатсиллĕ вĕренӳ ыйтаççĕ. Пирĕн ĕç пахалăхне хăпартас пулаť. Парттийтсăсен, комсомолĕссен, утарнăй прикатăсен, тата кашни уйрăм утарнĕкĕн происвотствăра кăна утарнĕк пулмалла мар, вĕсен пур çĕрте те: клупра, вуламалли çуртра, лекси вуланă çĕрте, происвотствăллă канашлусенђе т. ыт. çĕрте те утарнĕк пулмалла. Вĕсен кирек хăçан та Сталĕн йулташ:—«Совет сойусĕнђе—ĕç тăвасси—ђыслă, паттăрлă, мухтавлă, ђаплă пулса тăраť» тенине асра тытса тăмалла. Рапођђисен активне йышлантарас пулаť, вĕсене йертсе пымалли ĕçсене кăларса тăратмалла. Çĕнĕрен ĕçлеме кĕрекен рапођђисене воçпиттани парас пулаť. Комуниссене происвотствăра кашни çменăна, кашни тсеха пĕлсе тăратмалла. Кашни тсехра партти йертсе пыни сисĕнтĕр. Ĕçĕн тĕп никĕсне тсехсене куçармалла, пĕтĕм массăна рвађсемпе, хӳрере сĕтĕрĕнсе пыракансемпе, оппорттунисăмпа кĕрешес ĕçе мопилисатсилемелле. Происвотствă ĕçне йапăхлатса пыракансем çине массăн курайманлăхĕ тирĕнтĕр. Йађейккăсен хăйсен ĕç меслеђĕсене улшăнтарса çĕнĕлле ĕçлеме тытăнса, татăклă рукковотствăшăн çапăçмалла.

Парттийтсăсемпе комсомолĕссен происвотствă протсесĕсене лайăх пĕлсе тăрас тĕлĕшпе технĕкла пĕлӳпе хĕçпăшалланмалла. Вĕсен политтĕк тĕлĕшĕнђен те çав тери çирĕп пулма кирлĕ. Парттипе комсомол йађейккисен ĕçре кирек хăçан та малта пырса, хăйсен хыççăн ытти массăна йертсе пыраканнисем пулмалла. Ку тĕлĕшпе происвотствăн кашни уйрăм пайĕсене пĕлни кирлĕ пулаť. Çакăнта кăтартнă условисем пулсан кăна, епĕр пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулхи прокрамне тултарма пултаратпăр.

Строиттĕлствă ĕçĕнђе, пирĕн çитменлĕхсем хаљте нумай-ха. Ђађ-ђасах плансăр, пройектсăр ĕçлеме тытăнатпăр, çавăнпа хăшпĕр ђухне пирĕн ĕç сайа кайни те пулкалаť. Строиттĕлствăри массăллă ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пур. Ратсионалисатси ĕçне пуçарса йарас тĕлĕшпе нимĕн те тумастпăр, строиттĕлствă хакĕ йӳнелмест. Стройккăна кирлĕ хатĕрсемпе ĕçлекен вăйа тă-

ратас ĕç наҫар пырать. Çĕнĕ строительстзă пуçласа йарасси инçех те йулмарĕ. Партти Крайкомĕ йышăннă постановлени тăрăх строительствăна пур йенҫен те пулăшса, аталантарса пырас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тума кирлине халех палăртса хăвармалла.

Транспăрт ĕçне йĕркелеме çителĕклĕ вăй хурса ĕçлеме тивет. Епĕр ку ыйтăва ҫылай сÿтсе-йавкаланă, халĕ те сÿтсе-йаватпăр, çапах та вăл çителĕклĕ марха. Партти Тĕпкомĕ 1930-мĕш çулта, çенттапĕрĕн 10-мĕшĕнҫе йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пырас ĕç пит те наҫар пулса пырать. Пирĕн Улатăрти пăравуссене йусамалли савăтра пысăк прорыв. Нумай пулмасть, ку савăтăн ĕçне тишкĕрсе тухнă хыççăн, тÿсме çук ирсĕрлĕхсем, тата савăт ĕçне йертсе пырас ĕçре оппорттунисăм пурри аванах курăнҫĕ. Савăтра вретительствă та пулнă. Ку ĕнтĕ, Опком, çÿлте тăракан ҫукун çул çинҫи орканисатсисем, профсойус йенҫен те, хуçалăх йенҫен те савăт ĕçне çителĕклĕ таран йертсе пырайманнине пĕлтерет. Савăтри прорывсене пĕтерес тĕлĕшпе Партти Опкомĕ ҫукун çул çинҫе ĕçлекенсен Сойусĕн Тĕпкомĕпе пĕрле савăта прикатă йаҫĕç, анҫах унпа кăна çителĕклĕ марха, Улатăр орканисатсине прорывсене пĕтерес ĕçре малашне те пулăшмалла пулать.

Транспăрт ыйтăвĕсем хăйсем çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхма хушаççĕ. Ку ĕçре ҫукун çул çинҫи орканисатсисемпе пĕрлешсе Тĕпком кăтартувĕсене пурнăçа кÿртес пулать пирĕн.

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн ĕçсем калама çук йапăх. Ку тĕлĕшпе вирлĕнрех ĕçлеме тытăнас пулать. Опком Пÿровĕ йанварĕн 5-мĕшĕнҫе (1931-мĕш çулта) ку тĕлĕшпе йышăннă постановленине пурнăçлас пулать. Вăрман хатĕрлес çĕрте прорыв пуррине шута илсе, епĕр ку ыйтăва Пленăмăн кун йĕркине лартса сÿтсе-йавмалла турăмăр, çавăнпа та епĕ ку ыйту çинҫе ҫарăнса тăмăп.

Аш-какай, тата йĕтĕн хатĕрлес ĕçре пирĕн ĕçсене тĕппипех хускатса йарса оппорттунисăма çапса аркатмалла. «Аш-какай хатĕрлемелли плана тултарма май çук, аш-какай хатĕрлемесен те йурать, епĕр ĕлĕк те айакран кÿрекен аш-какайпа кăна пурăннă» т. ыт. тĕрлĕ калаçакансене хирĕç вирлĕн кĕрешсе, кулак хуçалăхĕсене çи-

рĕп сатанисем хурса плана пурнăçлас пулаť. Кулак хуçалăхĕсем çине сатани тăрăх хунă нормăна халех шыраса илмелле. Йĕтĕн хатĕрлемелли плана çитес кунсенђех тултармалла.

Екçпăрт планне тултарас ĕç те ку таранђђен те йапăх, хăйне хăй шуђĕпе пулса пыраťха вăл. Екçпăрт шуђĕпе епĕр хамăр тума тытăнайман, йе сахал тăвакан тĕрлĕрен машшинсемпе станоксене кранитсă тулашĕнђен кўрсе тăнине ăнланас пулаť. Екçпăрт планне тултарасси вăл—çĕнĕрен тăвакан претприйаттисене хăвăртрах ĕçе йамалла туни пулаť. Пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулхи прокрамине тултарасси—вăл иккĕмĕш пољшевикла çураки кампанине пирĕн пољшевикла иртермеллине пĕлтерет.

Ку ĕçе туса иртерме мĕнле хатĕрленетпĕрха епĕр? Ку таранђђен нађартарах хатĕрленетпĕр. Колхос йухăмне йертсе пырас ĕçе партти орканисатсийĕсем пурте хутшăнайманха. Колхос строиттĕлствинђе татăклă руковотствă çукрах. Колхоссенђи ĕçе орканисатсилесси, тырпулпа тупăша валеçес ĕç ђас-ђасах хăйне хăй кăна пулса пыраť. Колхоссенђи пурлăха пĕрлештерес ĕçе çарасси, пĕрлештернĕ ђăмăрсене çирĕплетесси çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Пирĕн ĕçе мĕнле орканисатсилесен лайăхрах пулма кирлине кăтартакан тĕплĕн сăнаса пăхнă маттериалсем те çук. Епĕр пĕр кектар çĕре ĕçлесе тума, сухалама, авăнне çапма, тата вăрлăхне турттарма мĕн ђухлĕ вăхăт кирлине те пĕлместпĕр. Çаксене тĕплĕн пĕлмесен епĕр, колхосри ĕçе кирлĕ пек орканисатсилеме, тата ĕç тухăçне хăпартма та пултарайрас çук.

Пиђетре çырнă тăрăххăн, епĕр пĕр колхосра ку ĕçе тума 16 кун иртернине пĕлетпĕр ĕнтĕ, анђах, ку ĕçе тума 48 кун иртерекен колхоссем те пур. Пирĕн Ђăваш респуплĕкĕнђе пĕр кектар çĕре пĕтĕмĕшпех ĕçлесе тума 37 кун иртерекен колхос та пур теççĕ. 16—37 тата 48 кун хушшинђе пысăк уйрăмлăх. Кунта кăтартнă тăрăххăн пĕр колхос пĕр кектар ĕçлесе тунă вăхăтра тепри 3 кектар ĕçлесе тума пултараť апла пулсан. Ку фактăсем колхосри ĕçе орканисатсилес ĕç çине вирлĕн çавăрăнса пăхма кирлине кăтартаççĕ.

1931-ш ç. пирĕн Ђăваш респуплĕкĕнђе суха пуçне тĕп-

пипех пĕтерсе висĕ пусăллă уйа пĕтерессишĕн çапăçма тытăнмалла. Ку пирĕн умма çав тери пысăк сатађ кăларса тăратаť, пирĕн ăна ăнланас пулаť, ку сатађсене пурнăçа кўртме пĕтĕм массăна мопилисатсилес пулаť. Вăл сатађсене пурнăçа кўртмеллех пирĕн. Тырпулпа коллективисатси кунĕнђе суха пуçне муçейа леçсе пăрахмалла. Ку ĕнтĕ Ђăваш çĕршывĕшĕн кулђтурăсăрлăха парăнтарас ĕçре пысăк çĕнтерў пулса тăрĕђĕ.

Контрактатси тăвас ĕç çине халиђђен сахалтарах çавăрăнса пăхаççĕ, хăшпĕр ђухне ун çинђен манаççĕ те. Тĕпкомпа ССРС-ђи ХКК-ĕ çуртыррисене контрактатсилес пирки ђĕнсе каланине пурнăçлас тĕлĕшпе пĕтĕм опђăна çав ђĕнў тавра мопилисатсилемелле. Ку ђĕнў колхос строиттĕлствине, выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕçе вăйлатакан вăйлăран та вăйлă хĕçпăшал пулса тăмалла.

Совет патшалăхĕ йалхуçалăхне вăйлатма çав тери нумай укçа-тенкĕ хываť. 1931-мĕш çулта йалхуçалăхне 120.000 трактăр параççĕ, тата 1.040 çĕнĕ МТС орканисатсиленмелле. Йалхуçалăхне паракан йалхуçалăх машшинĕсен шуђĕ икĕ хут нумайтарах пулмалла. Йалхуçалăхне 7.000 автомопил, 145 мĕлйун пăт минерал çăнăхĕ параççĕ. Колхоссемпе МТС-не 1.050 мĕлйун тенкĕ укçа параççĕ, тата ыт. те.

Çакнашкал нумай укçа-тенкĕ хывни йалхуçалăхне коллективисатси çулĕпе кайма, тата хăйĕн сăн-сăпатне тĕппипех улшăнтарма калама çук пысăк пулăшу памалла. Совет влаçĕ кăна йалхуçалăхне çĕнетсе вăйлатас ĕçе тума çав тери нумай укçа-тенкĕ хывма пултараť. Кунашкал нумай укçа-тенкĕ хывма нихăш кăпитталисла патшалăх та пултараймасť. Çак укçа-тенкĕ хывни 1931-мĕш çулта пур хресђен хуçалăхĕн 50 прођђăнне колхоссемпе ыталаса илсе, сотсиалисăмлă çектăрăн калăпĕшне кăпитталисла çектăр калăпĕн виçинђен иртерсе йамалла. Пирĕн йалхуçалăхне сотсиалисăмла интустрипе пĕтĕçтерес сатађа хамăр умма кăларса тăратнипе пĕр танах, йалхуçалăхне талкишпех ушкăнлатни урлă кулаксен класне пĕтерсе, хулапа йал хушшинђе протуктăсемпе тўррĕн улшăнас ĕç çине куçмалла. Ку ĕçре контрактатси тăвасси пысăк вырăн йышăнса тăраť, çавăнпа та пирĕн контрактатси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

1931-мĕш çулта, пирĕн суха пуçне тĕппипех пĕтерсе, виçĕ пусăллă уйа аркатмалла, çĕнĕрен 4 МТС оркanisatсилемелле, тата мĕн пур пек хресђен хуçалăхĕн 30 прођђăнне ушкăнлатмалла, выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕçе сотсиалисăмла сарса вăйлатмалла. Ку ĕçсене пĕтĕмĕшпех кăпитталисла елементсем çине хăйуллă наступлени тунипе, йалхуçалăхне талккишпех ушкăнлатни урлă кулаксен класне пĕтерес ĕç çине куçнипе туса иртермелле. Пирĕн пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи прокрамине тултармалла кăна мар, ытлашшипех тултармалла.

Пирĕн тума йышăннă претприйаттисене туса пĕтерсе ĕçе йанипе пĕр танах, çĕнĕрен строиттĕлствă ĕçне пуçласа йарса аталантармалла. Хут пĕлменлĕхе пĕтерсе куђттурлă револђутси ĕçне малалла йамалла. Çак ĕçсене тăвасси, пĕтĕм Совет аппаратне ĕç меслеђĕсене улшăнтарса çĕнĕлле ĕçлеме хушаť. Пирĕн пуринђен ытларах кĕçĕн совет аппараđĕсен ĕçне çирĕплетес ĕç çине вирлĕнрех çавăрăнса пăхас пулаť. Вĕсен ĕçне йертсе пырассине кирлĕ пек йĕркелесе çитермелле. Районсен сотсиалисăм строиттĕлствин ђăн-ђăн ђенттăрĕсем пулса тăмалла. Респуплĕке районлас ĕçе епĕр 1927-мĕш çултах туса иртернĕ пулин те, районсем халиђђен те çирĕпленсе çитейменха. Ђенттăрта та, районсенђе те ĕç меслеђĕсене улшăнтарса çĕнĕлле ĕçлеме пуçăнман.

Совет ĕçне ĕçлеме ђăвашсенђен çĕнĕ катăрсем хатĕрлес ĕç çине çителĕклĕ таран çавăрăнса пăхман. **Молăттăв** йулт. вак-халăхсем хушшинђе катăрсем хатĕрлес ыйтусем çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхаť. **Молăттăв** йулташ **ССРС Тĕпĕçтăвкомĕн** çеççинђе катăрсем хатĕрлесси çинђен каланă ђухне: «Хађхи вăхăтра **вакхалăхсем** хушшинђе катăрсем хатĕрлес ыйту уйрăмăнах çĕнĕ майлăн тухса тăраť. Вак-халăхсем хушшинђе, вырăнтах катăрсене мĕн пур вăйран çитĕнтерсе пырасси айакка тăратса хăварма май çук сатаđсенђен пĕри пулса тăраť. Унсăр пуçне епĕр, районсен ĕçне лайăхлатма пултараймастпăр, районсене пур йенђен те çирĕплетсе çитереймесен, епĕр хамăра панă сатанисенђен нумайĕшне пурнăçа кўртейменĕр»—тенĕ.

Пирĕн çак кăтартува пурнăçа кĕртесех пулаť.

Пуринђен ытларах плансем тӑвас ӗç çине вирлӗрех çавӑрӑнса пӑхмалла. Уйрӑмӑнах йалхуçалӑх планӗсене тӑвасси çине виђкӗнрехкӗн пӑхмалла. Йалхуçалӑх планне кам-кам тумастши. Çӗрӗç кӑмиссариађӗ, Снапшени кӑмиссариађӗ, План комиççи, Выљӑх-ђӗрлӗх ӗрђетекен Сойус, Пахђа-çимӗç Сойусӗ, т. ыт. те. Пурте план тӑваççӗ. Çураки камппани мӗнле иртнине, плана мӗн ђухлӗ тултарнине ыйтса пӗлес тесен, нихӑшӗ те татӑклӑн мӗн те пулин каласа параймаççӗ. Ку ӗçри йӗркесӗрлӗхе тӗппипех пӗтерсе, сотсиалисӑмла формӑсемпе çӗнелекен йалхуçалӑхне ђӑн-ђӑн план тӑрӑх йертсе пымалла тӑвас пулаť. Плансене тӑвас ӗçе пӗр оркӑн кӑна туса пымалла тӑвас пулаť. Ытти оркӑнсем плансене тӑвакан оркӑна пулӑшса тӑђђӑр кӑна. Ку шала-пала ӗç марӑна тӗплӗнех сӳтсе-йавма кирлӗ пулаť. Плансене тӑвас ӗçе хаљхи пек туса пырсан, епӗр нумайах малалла кайаймӑпӑр. Опком пӳровӗпе Оплӑçри Контроль Комиççин Преçитиумӗн ђенттӑрти оркӑнсен ӗç меслеђӗсене улшӑнтарассипе районсене çирӗплетес тӗлӗшпе мӗн-мӗн тума кирлине халех сӳтсе-йавса татӑклӑнах палӑртса хумалла.

Советсем çӳлтен пуçласа айала çитиђђенех парттин тӗп çулйӗрне пурнӑçлас ӗçре мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине практӗкла ӗçре ӑнланас пулаť. Вӗсен ӗçӗсене хаљхи, сотсиалисӑм строиттӗлстви тапхӑрӗн сатађӗсене шута илнипе улшӑнтарса çӗнӗлле ӗçлеме тытӑнмалла тӑвас пулаť. Советсен хӑйсен ӗçне туса пынӑ ђухне çӗнӗ актив çине, пуринђен малтан хапрӑк-савӑтсенђи утарнӗксемпе йалти колхоçнӗксем çине тайанмалла. Ђухӑнсем хушшинђи ӗçе сарса, вӗсене орканисатсилеме, кулленхи ӗçе хутшӑнтарма пӗлес пулаť. Пирӗн йалсенђе актив йышӗ, тата орканисатсиленнӗ массӑ йышӗн шуђӗ пысӑк. Темиçе пин йалсовет ђленӗ, 26.000 колхоса кӗнӗ хресђен хуçалӑхӗ, 20.000 ПСÇЛКС ђленӗ, тата тӗрлӗ копперативв ђленӗсем те йышлӑ. Кӑсемсӗр пуçне пролеттари опђин орканисатсийӗсем т. ыт. те пур. Ку вӑйсене орканисатсилеме, тата вӗсемпе кирлӗ пек усӑ курма пӗлес пулаť. Кӗçӗн советсен активне хатӗрлес тӗлӗшпе, пирӗн çитес кунсенђех курссем орканисатсилесе хатӗрлемелле. Пирӗн йалсенђи партти орканисатсийӗсен ӗç меслеђӗсене улшӑнтарса çӗнӗлле ӗçлемелле туса, активӑн политтӗк

пӗлӳне те ӳстермелле. Вара епӗр, хамӑр умра тӑракан сатаҫсене пурнӑҫа кӳртетпӗр, йалхуҫалӑхне талккишпех ушкӑнлатса пыни урлӑ кулаксен класне тӗппипех пӗтерме пултаратпӑр тесе хӑйуллӑн татса калама пултаратпӑр.

Районсенҫи пиҫет ӗҫӗ ҫинҫен пӗр-икӗ сӑмах. Тухса калакан йулташсенҫен, пиҫет ӗҫне ӗҫлекенсемсӗр пуҫне, районсенҫи пиҫет ӗҫӗ ҫинҫе нихӑш те ҫарӑнса тӑмарӗҫ. Ку ӑнсӑртран кӑна пулнӑ сӑлтав мар пулӗ. Опком районри хаҫатсен ӗҫӗсем ҫинҫен токлатсем итлесе сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, ку ӗҫре ҫав тери нумай ҫитменлӗх пурри палӑрҫӗ. Ҫи пысӑк ҫитменлӗхсенҫен пӗри, партти орканисатсийӗсем районсенҫи хаҫатсен ӗҫне наҫартарах йертсе пыни пулса тӑраҭ. Районсенҫи пиҫет халиҫҫен те массӑсен колективлӑ орканисаттӑрӗ, йалхуҫалӑхне сотсиалисӑмла формӑсемпе ҫӗнетсе пырас ӗҫӗн орканисаттӑрӗ, тата партти тӗп ҫулйӗрӗшӗн ҫапӑҫакан коллективлӑ ҫар пулса тӑрайманха. Районсенҫи пиҫет ӗҫне йертсе пырас тӗлӗшпе, районсенҫи хаҫатсене йалхуҫалӑхне сотсиалисӑмлӑ формӑсемпе ҫӗнетсе пырас ӗҫре паллӑрах вырӑн йышӑнтарас тӗлӗшпе районсен хӑйсен ӗҫне вӑйлатас пулаҭ. Районсенҫи хаҫат ретаксийӗсен ӗҫйалкорсене хӑйсен хаҫаҫӗсем тавра орканисатсилес тӗлӗшпе, массӑна партти тӗп ҫулйӗрне пурнӑҫлас ӗҫе, йалхуҫалӑхне ҫӗнетес ӗҫе, тата партти тӗп ҫулйӗрӗшӗн ҫапӑҫас ӗҫе мопилисатсилесе хутшӑнтарас тӗлӗшпе вӑйлӑн ӗҫлемелле.

Йертсе пырас ӗҫре ӗҫлекенсем пиҫетре наҫар ӗҫлеҫҫӗ. Крайкомӑн йанварти Пленӑмӗ пулса иртнӗ вӑхӑтра, «Нижегородская Комуна» хаҫат ретаксийӗ ҫумӗнҫе пулса иртнӗ канашлура йертсе пырас ӗҫре ӗҫлекенсем хаҫат урлӑ наҫар ӗҫленине палӑртса хӑварҫӗҫ. Кунта puринҫен ытларах вак-халӑхсем хушшинҫи рукковотиттӗлсем наҫартарах ӗҫленине уйрӑмӑнах палӑртса, малашне йертсе пырас ӗҫре ӗҫлекенсене пиҫетре ӗҫлемелле тума кирлине кӑтартса хӑварҫӗҫ. Пирӗн йертсе пырас ӗҫре ӗҫлекенсене пиҫетре ӗҫлемелле тӑвас пулаҭ.

Ҫакнашкал сатаҫсем тӑраҫҫӗ ӗнтӗ пирӗн умра, йулташсем. Епӗр ӗҫ меслеҫӗсене улӑштарса ҫӗнӗлле ӗҫлеме тытӑнсан, хамӑр ӗҫри мӗн пур пек ҫитменлӗхсене пӗттерсе пырсан, хамӑр умра тӑракан сатаҫсене пурнӑҫа кӳртсе, епӗр партти тӗп ҫулйӗрӗшӗн сӑмахпа

кăна мар, ĕçпе кĕрешнине кăтартăпăр. Ку тĕлĕшпе сылтăм оппорттунисăмпа, тата «сулахайла» пăрăнђăксемпе татах та вирлĕнрех çапăçма тытăнмалла. Самокриттĕке сарса, аталантарса пынипе, тата массăна мопилисатсиленипе епĕр пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи планне тултарма кирлĕ условисене пĕтĕмĕшпех тăвăпăр. Пилĕк çуллăх плана та çавнашкалах 4 çулта ăнăçуллă тултарăпăр.

Кунта тухса калакансем пурте **Рыккăв** йулташа Тĕпком Политпÿровĕн ђленĕнђен, тата ССРС-ђи Халăх Кăмиссарĕсен канашĕн претçетаттĕлĕ ĕçĕнђен хăтарса ун вырăнне çирĕп ленинтсăсенђен пĕрне, **Молăттăв** йулташа суйланине ырларĕç. Кунашкал туни, епĕр Партти Тĕпкомĕ йертсе пынипе малалла татах та вăйлăн утассине, пилĕк çуллăх планăн 3-мĕш çулĕнђи прокрамне тултарса сотсиалисăмла еккономĕк никĕсне хывса çитерессине ĕнентерекен çирĕп шанђăк пулса тăрат.

## ПСК(п)П Опкомĕн 3-ш пленăмĕ

**ПСК(п)П Тĕпкомĕпе Тĕп Контроҕ Комиççин теккапĕрти пĕрлешӳллĕ пленăмĕ, тата Ҕулхула Крайкомĕн йанварти пленăм ĕçĕсем çинҕен Ç. П. Петров йулташ токлаҕĕ тăрăх йышăннă РЕСОЉУТСИ**

Партти Тĕпкомĕпе Тĕп Контроҕ Комиççин теккапĕр уйăхĕнҕе пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленăмĕпе Ҕулхула Крайкомĕн йанварти пленăмĕн ĕçĕсем çинҕен Петров йулташ токлатне итлесе сӳтсе йавнă хыççăн ПСК(п)П Опкомĕн 3-мĕш пленăмĕ Тĕпкомпа ТКК пленăмĕпе Ҕулхула Крайкомĕн пленăмĕ йышăннă решшенисене пĕтĕмĕшпех ырлать.

Ҕăваш Опкомĕн пленăмĕ, Тĕпкомпа ТКК пленăмĕ Совет сойусĕн 1931-мĕш çулхи халăх хуçалăх планĕ çинҕен решшени йышăнса, парттин 16-мĕш сйесĕ сотсиалисăмла наступленийе пĕтĕм фронтпа аслăн сарса пырасси çинҕен йышăннă решшенисене пурнăçласси çинҕен татăклăн кăтартса хăварҕĕ; пленăм пĕтĕм парттипе пĕтĕм рапоҕҕи класа 1931-мĕш çулта сотсиалисăмлă економĕк никĕсне хывса çитерме ҕĕнсе хăварҕĕ. Ку вăл— «пĕтĕм тĕнҕипе паллă пысăк вырăн йышăнса тăракан историллĕ çĕнтерӳ пулать».

Ленинла Тĕпкомпа Партти çулпуçĕ Сталин йул· йертсе пынипе, тата пирĕнпе урсах хирĕçекен клас тăшманĕ-

семпе вёсен парттири акёнђёсене—халђхи тапхăрта тĕп хăрушлăх пулса тăракан сылтăм оппортунисăма хирĕç, контрреволђутсиллĕ тротскисăмпа тата тротскисăмăн ретситивĕсене хирĕç, «сулахай» пăрăнђăксене хирĕç, икĕ питленекенсемпе пур йышши сулăнђăксемпе те килĕшекенсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пырса парттин сотсиалисăм строиттĕлствипе пилĕк çуллăхăн малтанхи икĕ сулĕнђи плансене ытлашшипех пурнăçа кĕртес ĕçре татăклă çитĕнӳсем турĕ; пурне те хута вĕрентес ĕçе тытăннă, хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе массăллă ĕçе тапратса йанă, катăрсем хатĕрлетпĕр, тата ыт. те; ĕççĕрлĕхе пĕтернĕ, 1931-мĕш çулта рапођђисене 7 сехетлĕ ĕç кунне куçарасси пĕтĕмĕшпе илсен пурнăçа кĕрсе çитет. Çак вăхăтрах кăпиталисла патшалăхсенђе криçĕс кăпиталисăм никĕсне тĕпрен хавшатать, криçĕс ытларан та ытларах вăйланса пырать, рапођђисене вуншар мĕлйунăн урам хушшине кăларса ыватать. Пирĕн Совет сойусĕн çитĕнĕвĕсем: економĕк çĕнĕ политтĕкĕн халђхи тапхăрĕ ЕÇП йулашки тапхăрĕ иккенне, епĕр сотсиалисăм тапхăрне кĕнине, пĕлтереççĕ; мĕншĕн тесен «сотсиалисăм йĕрки туса çитерессипе классен уйрăмлăхĕсене пĕтересси халђ айакра пулин те сотсиалисăм çектăрĕ халђхи вăхăтра мĕн пур халăх хуçалăхĕн рыђакĕсене пурне те хăй аллинђе тытса тăрать» (Сталин).

Тĕпкомпа партти крайкомĕ тĕрĕс йертсе пынипеле Ђулхула крайĕнђе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Промышлĕннăç пĕтĕм протуксийĕ 1930-мĕш çулта 39,2 прођђăн ӳснĕ; пĕр çул хушшинђе рапођђисен шуђĕ 30 прођ. ӳснĕ; Автăсавăт, Станкострой, Ђерноређенски кăмпинат, Çĕнĕ Сормăвă, Палахнари хут кăмпинађĕ, Ратиосавăт, Çĕмĕрлери кăмпинат, Куславкари çуртйĕр савăђĕ, Окка кĕперĕ, тата ытти çакăн пек кикантсем тума тытăннă. Кусемпе пĕрлех йалхуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетес ĕç

вăйланса пырать; Крайа кĕрекен натсиллĕ автономисен хуçалăхпа куљттурă строиттĕлстви пысăк утăмсемпе ўссе пырать. Крайкомăн йанварти пленăмĕ çирĕплетсе хăварнă халăх хуçалăхĕпе куљттурă строиттĕлствин 1931-ш çулхи асăрхамалли ђыхвăрĕсем сотсиалисăм строиттĕлствине тата пысăкрах хăвăртлăхсемпе малалла йама май параççĕ. Ку плана автономиллĕ респуплĕксемпе оплăçсен интересĕсемпе уйрăмлăхĕсене хисепе илсе тунă. Çакăн пек пысăк хăвăртлăхсемпе ўссе пырса Ђулхула крайĕ çĕрĕçĕпе интустриллĕ крайран интустрипе çĕрĕçлĕ край пулса тăрать.

Пилĕк çуллăхăн 3-мĕш çулĕ пилĕк çуллăх плана 4 çулта пурнăçа кĕртес тĕлĕшрен татăклă çул пулса тăрать. 1931-мĕш çулта пирĕн халăх тупăшĕ 49 мĕлйарт тенке çитермелле, пĕр финанс планне 31 мĕлйарт тенкĕ таран пурнăçа кĕртмелле, промышлĕннăçăн пĕтĕм протуксийĕ вăрçăђђенхинђен виçĕ хут иртсе каймалла, тĕрлĕ машшинсем, йалхуçалăх ĕçхатĕрĕсемпе машшинсем, станоксем, пысăк интустриллĕ претприйаттисем тăвассипе, çĕркăмрăк, ђукун, нефт т. ыт. кăларас хăвăртлăхсене тата ытларах вăйлатмалла; Пĕтĕм Совет сойусĕпе колхосра тăракан хуçалăхсен хисепĕ пĕтĕм ђухăнпа вăтам хресђен хуçалăхĕсен шутĕнђен 50 прођђăнран кайа мар пулмалла; çак çулхинех выљăх-ђĕрлĕхе кирлĕ таран ĕрђетес сатађа пĕтĕмĕшпе илсен ĕçе кĕртсе çитермелле, талкăшпе колхоса куçса пынă май кулаксем клас пулса тăнине пĕтерсе пымалла.

Çак ĕçсем пурте пĕтĕм парттин, рапођђи класăн пĕтĕм ĕçхалăхĕн вăйне тата ытларах пултарулăхлă тума хушаççĕ; партти, советпа хуçалăх, колхоспа копператси, профсойус, комсомол тата ытти пĕтĕм орканисатсисен ĕçĕсене татăклăн çĕнетсе урăхлатма хушаççĕ; пĕр пуçлăх ыйтăвне ђăн-ђăнах пурнăçа кĕртсе пымалла; сотсиали-

са́млӑ ӑмӑртува, утарлӑ ĕçе, хирĕçле план тӑратас ĕçе тата ытларах сарса йамалла; клас тӑшманне, тата пӑрттири унӑн акĕнҫĕсене хирĕç вирлĕн кĕрешсе пымалла.

Советсем ҫӑн-ҫӑнах утарлӑ ĕç йеннелле, колхоссем йеннелле çавӑрӑнса тӑмалла, массӑн ӳссе пыракан хастарлӑхӑн пуçне тӑрса пымалла, сотсиалисӑм строиттĕлствин пур ĕçĕнҫе те парттин тĕп çулйĕрне пурнӑçа кĕртсе пыракансем пулмалла.

Советсен ĕçĕсене çĕнĕ çул çине тӑратас ĕçре ҫи кирлĕ сатаҫ—парттипе совет влеçĕн решшенисене мĕнле пурнӑçа кĕртнине тĕрĕслесе пырасси, тата çынсене суйласа лартма пĕлни, пулса тӑраť.

Пленӑм, Партти Тĕпкомĕпе Тĕп КК пленӑмĕ советсен суйлавĕпе рапоҫҫи снапшени ыйтӑвĕ тӑрӑх йышӑннӑ решшенисене ырласа, пĕтĕм партти орканисатсисене çак решшенисене татӑклӑн пурнӑçа кĕртессишĕн, совет аппаратĕнҫен оппортунисла йут елементсене хӑваласа кӑларса, вĕсен вырӑнне çĕнĕрен çынсене ҫи малтан—хуçалӑхпа политтĕк кампанисенҫе хастарлӑн ĕçлесе хӑйсене палӑртнӑ, утарнĕксене, колхоçнĕксене, патраксемпе ҫухӑнсен хушшинҫи активиссене, тата хĕрарӑмсене ĕçе лартса пымалла. Совет аппаратне ҫӑвашлатассипе, тата тĕп халӑхран пролеттари катӑрĕсемпе спетсialиссем хатĕрлес тĕлĕшпе татӑклӑ улшӑну тумалла. Çак ĕçре хӑй тĕллĕн пырассипе пӳрократла, оппортунисла, аслӑпатшалӑхлӑ натсионалисла елементсен хирĕçнине пĕтĕмпех çĕмĕрсе тӑкмалла.

Партти Ҫӑваш Опкомĕ 3-мĕш пленӑмĕ, Партти Тĕпкомĕ Рычкӑв йулташа Политпӳро ҫленĕнҫен, тата ССРС-ҫи Халӑх кӑмиссарĕсен канашĕн претçетаттĕлĕнҫен кӑларнине ырласа, ун вырӑнне партти тĕп çулйĕрĕшĕн çирĕппĕн кĕрешекен Молӑттăв йулташа лартнине ырлаť.

Пахалӑх кӑтартăвĕсене ӳстересси çине (промышлĕн-

наç протуксин хăйне ларакан хакне йÿнетесси, строиттĕлствă хакне йÿнетесси, ĕçтухăçлăхне хăпартасси, протуксийе лайăхлатасси, транспăрт ĕçне лайăхлатасси тата ытти те) уйрăмах хыттăн пăхмалла; çак ĕçе хăпартма пĕтĕм вăйа хумалла, мĕншĕн тесен, пахалăх кăтартăвĕсене ÿстермесĕр, пилĕк çуллăхăн татăклă 3-мĕш çулĕн прокрамне туса çитерме пултарас çук.

Ђăваш Опкомĕн пленăмĕ Парттин Ђăваш орканисатсийĕ йенђен пилĕк çуллăхăн 3-мĕш çулĕнђи прокрамне пурнăçа кĕртсе пырасси: промфинпланпа пахалăх кăтартăвĕсене тултарасси, промышлĕннăçри вăйсене пухса тăратассипе укçа-тенкĕне пухасси, вăрман хатĕрлес ĕç, йалхуçалăх протуксисем хатĕрлесе хурасси, йут патшалăхсене йамалли таварсем хатĕрлесси, вĕсене тăвасси, çуракине хатĕрленесси, МТС-сем тăвасси, тата колхос йухăмне вăйлантарса йарас ĕç çителĕксĕр пулса пыраť, тесе шутлаť; хăш-пĕр ĕçсем тата уйрăмах: ашкакай, вăрман хатĕрлес ĕç промфинплана тултарасси, укçа тенкĕ пухасси тата МТС-сем тăвас ĕç—йапăх пыраççĕ.

Пленăм партти орканисатсийĕсене, советпа хуçалăх, колхоспа копператси, профсойус, тата комсомол орканисатсийĕсене пурне те халех тăрăшса, ĕçе урăхлатса йама, пилĕк çуллăхăн 3-мĕш прокрамне тултарма кирлĕ майсем туса хума ђĕнет.

Партти Тĕпкомĕпе, Крайком, тата Опком темиçе хутђен те хытă кăтартусем панă пулин те кулакпа пуйан хуçалăхĕсем çине çирĕп сатанисем хурасси виçĕ прођђăнтан та иртмест, хăшпĕр районсенђе унтан та кайарах. Ђылай вырăнсенђе çирĕп сатанисем уйрăм налоксем хунă кулак хуçалăхсенђен парăмсене вăхăтра шыраса илмеççĕ; парттипе совет, тата комсомол ĕçĕнђе ĕçлекен хăшпĕр çынсем йенђен кулаксене пытарса тăнисем пулкалаççĕ; колхос строиттĕлстви çине оппортунисла

пăхнисем, шкулсенҫе сылтăм оппортунисла ĕçсем курăнкалаççĕ т. ыт. те. Çаксем пурте—практĕкри сылтăм оппортунисла ĕçсене хирĕç, ĕç хăйех пулса пырасси çине шанса тăнине хирĕç татăклăн кĕрешме хушаҭ, капиталисла елементсем çине хыттăн тапăнса пыма, кăпиталисăм тымарĕсене тĕппипех кăклама, тата талкăшпех колхоса куçнă май кулаксен клас пулса тăнине пĕтерсе пыма хушаççĕ.

Ҫăваш çĕршывĕнҫе пуршуаллă темократти натсионалисăмĕпе унăн Ҫ ă в а ш  о р к а н и с а т с и н ҫ и акĕнттурине—елменшҫĕна теори тĕлĕшĕнҫен çĕмĕрсе тăкнă пулсан та унăн шухăшĕсене темиçе çул хушши сарса пынă пирки, вăл тарăн тымарланса йулнине манма йурамасҭ. Çак пропакантă партти орканисатсин уйрăм сыпăкĕсенҫе партти сисĕмлĕхне йакатмасăр хăварма пултарайман. Çавăнпа та Опком пленăмĕ пуршуаллă темократти натсионалисăмĕпе унăн парттири акенттури—елменшҫинăна малашне те уççăн палăртса пырса, ăна хирĕç хайаррăн кĕрешмелле, тесе шутлаҭ; ку ĕçе—практĕкри сылтăмла ĕçсемпе «сулахайла» пăрăнҫăксене пĕтерсе, партти массине теори тĕлĕшĕнҫен вăйлăлантарнипе туса пымалла.

Опком пленăмĕ çакна палăртаҭ: Елмен йулташ, 1929-мĕш çулăн çенҭапĕр уйăхĕнҫе Партти Тĕпкомĕ çумĕнҫе ҫăвашсен партти ĕçĕнҫе ĕçлекенсен канашлăвĕнҫе «Чувашское хозяйство» шурналăн 3—4 нумĕрĕнҫе умстаҭйа пирки çаксене йышăннă:

а) «пурнăçри фактăсем стаҭйара хак панинҫен пĕтĕмпех урăхла; çавăнпа стаҭйари шухăшсем йăнăш анҫах мар, тата вĕсем, тĕрĕссипе клас тăшманĕн арманĕ çине шыв йухтараççĕ».

у) «Çак йăнăшсен пысăккăшĕ, вĕсем пĕр çын шухăшĕнҫен анҫах мар, клас кĕрешĕвĕ хайарланса пынипе кулак

хирĕçĕвĕ вăйланса пыни урлă тухса тăнипе гата ытларах ÿсет; вăл шухăшсем натси ыйтăвĕнҫе пуршуаллă темократтиллĕ туртăмсене кăтартаççĕ».

ы) «Асăннă статйари шухăшсем политтĕкла пысăк йăнăшсем пулаççĕ, çавăнпа вăл шухăшсенҫен епĕ пĕтĕмĕшпех сивлетĕп, **вăл шухăшсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымалла, тесе шутлатăп».**

ă) «Тĕп КК-не панă сайавленире принтсĕплă политтĕклă ыйтăва харпăрхăй хушшинҫи ĕçсем çине куçарнă; вăл сайавленине тĕрĕс мар, политтĕклă йăнăш шухăшлă тесе шутлатăп, çавăнпа та вăл сайавленине сивлетĕп».

Елмен çакăн пек сайавлени панă хыççăн 1930-мĕш çул вĕçне çитиҫҫенех хăйĕн йаҫĕпе çыхăнса тăракан парттийе хирĕç шухăшсене çĕмĕрес тĕлĕшпе нимĕн те тумарĕ. Вăл шухăшсемпе кĕрешес вырăнне пуршуаллă темократтиллĕ елементсем Октапĕр револютсине хирĕç елекпе тухнине («Крайплан»-ăн 1930 ç. 5—6-мĕш нумĕрĕ çинҫи Алексçейĕв статйи) ним шарламасăр ырласа тăнă.

Кунпа та çитмест, Елмен тата шарламасăр кĕтсе пурăнас тактĕкран Ҫăваш оплăçĕнҫи партти руководтствине тапăнас тактĕкка куçат. 1930-мĕш çулăн теккапĕрĕн 6-ҫе Ҫулхулари комвусăн партти коллективĕн пÿро ларăвĕнҫе Елмен «ҫăваш пиҫетĕнҫе Ҫăваш орканисатсинҫи партти рукковотствине тивĕçлĕ мар тесе, хамăн йăнăшсем çинҫен çырма та шутламан, çырмастăп та» тенĕ.

1930-мĕш çулăн теккапĕрĕн 18-мĕшĕнҫе «Красная Чувашия» хаçатра Опком çекреттарĕ Петров йулташ çырнă статйана коллектив пÿровĕн çав ларăвĕнҫех «вăл, епĕ ҫăваш партти орканисатсинҫе ĕçленĕ ҫухнехи хамăр хушăри ĕçсем пирки ман çине тăрăнни», тесе каланă.

Çапла ĕнтĕ Елмен хăйĕн сылтăм оппортунисла йăнăшĕсене сăмахпа йышăнса, Парттин Оплăçри рукковот-

ству ҫине ҫӗнӗ аттакă тапратса, партти ӗретӗнђе ђăтма май ҫук икӗпитлӗхе палăртрӗ.

Пленăм, партти Опкомӗн рукковотстви пирки Елмен суйса елекленине пӗтӗмӗшпе сирсе ывăтаť; халђхи тапхăрти тӗп хăрушлăха—сылтăм сулăнђăка хирӗҫ, «сулахай» пăрăнђăксене хирӗҫ, аслăпатшалăх шовинисăмӗпе вырăнти натсионалисăма хирӗҫ, тата пур йышши сулăнђăксемпе те килӗштерсе пыракансене хирӗҫ нимӗн шеллемесӗр вирлӗн кӗрешсе пырса, Опком пўровӗпе унăн ҫекреттарӗ—Петров йулташ массăна кулаксемпе кӗрешес ӗҫе, тата сотсиалисăм строиттӗлствине малалла сарса йарас ӗҫе мопилисатсилесе, парттин тӗп ҫулйӗрне пурнăҫа ҫирӗп кӗртсе пыраҫҫӗ.

Ҫавăнпа Опком пленăмӗ Ђулхулари Комуниверҫитетри партти коллективӗ икӗ питлӗ Елмене парттирен кăларма йышăннине ырласа Крайри Контрођ комиҫҫине ăна парттирен кăлармалла тунине ҫирӗплетме ыйтаť.

Опком пленăмӗ—А. Миххайлăв елменшђинăпа килӗшнине хăйӗн йăнăшӗ вырăнне хурса сăмахпа йышăннипе пӗрлех, вăл хăй йăнăшӗсене йышăнни ҫинђен пиђетре ҫырса пӗлтерме пленăм хушнине ку тарана ҫитсе те пурнăҫа кӗртменнине палăртаť. Ҫапла вара натсионал-темократла тата сылтăм сулăнђăклă Елмен шухăшӗсемпе кӗрешме сăмах панине пурнăҫа кӗртес вырăнне Миххайлăв йул. хăйӗн ӗлӗкхи поҫитсине халӗ те хўтӗлесе пыраť. Пленăм Миххайлăв йул. хăйӗн шухăшӗсене халех пӗлтерсе партти ҫулйӗрӗшӗн кӗрешме хушаť.

Совет сойусӗнђи халăх хуҫалăхӗ сотсиалисăм тăвас ӗҫсен пысăк планне,—пилӗк ҫуллăх плана тултарса ҫитересси умӗнђе тăраť. Пулас татăклă ҫӗнтерў рапођђисемпе хресђенсем хушшинђе ҫӗнӗрен ӗҫ хаваслăхӗпе ӗҫ пултарулăхне ҫӗклентермесӗр тăма пултараймасť. Ҫакăнпа пӗрлех вăл пирӗн клас тăшманӗсен усаллăхӗпе

курайманлăхне те вăйлатмасăр иртме пултараймасҁ. Ҫавăнпа та вара Совет сойусĕнҕи кăпиталисăм йулашкисем урса кайсах хирĕҫеҫҫĕ (кулаксем хирĕҫни, сăтăрлă ĕҫсем) тата ытти те . Ҫавăнпа пĕтĕм тĕнҕе кăпиталисăмĕ урса кайсах хĕҫпăшалланса Совет Сойусне хирĕҫ вăрҫăпа тухма хатĕрленет. Классен кĕрешĕвĕ ҫакăн пек ҫивĕҕленсе ҫитнĕ вăхăтра, сотсиалисăм строиттĕлстви ҫулĕ ҫинҕе, «пилĕк ҫуллăха—4 ҫулта» лосăнка пурнăҫлас ҫул ҫинҕе тăракан йăвăрлăхсене ҫĕнтерме пĕтĕм рапоҕҕи класăн, колхоҫнĕксен тата мĕнпур ĕҫҫынниСен пултарулăх вăйне мопилисатсилени кирлĕ. Ҫак условисенҕе ĕнтĕ ҫĕршыва интустрилессипе сотсиалисăм строиттĕлствине малалла та сарса пырассишĕн, тата ҫĕршыв сыхлăхне вăйлатассишĕн пĕтĕм хамăр вăйа хуни кирлĕ.

Пилĕк ҫуллăхăн 3-мĕш татăклă ҫулĕнҕе ССР сойусĕн сотсиалисăмла економĕк никĕсне хывса ҫитерессишĕн!

Совет сойусĕнҕе сотсиалисăм татăклăнах ҫĕнтерессишĕн!

Ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем патне—малалла!

## ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ

Çак çĕнĕрен кăларнă кĕнекесене илсе вулама тăрăшăр!

Резолюции и постановления III пленума Чувашского ОК ВКП(б) 15 созыва (28 января—2 февраля 1931 г.).

С. П. ПЕТРОВ. Натси ыйтăвĕнђи сулăнђăксемпе икĕ фронтпа та кĕрешессишĕн.

1931-мĕш çулхи йалхуçалăх налукĕ çинђен кăларнă полошени.

Кĕнекесене потрепкопператси урлă илмелле.

Ђ. П. И.

Цена семнадцать копеек

С. П. ПЕТРОВ

**ВПЕРЕД К НОВЫМ ПОБЕДАМ!**

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕН. ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары
1931

★